Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 26 ЕРНЕКУН 196 (5009) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—6—68, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—6—55, промышленнăç пайĕн—7—87, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Хĕрлĕ Çарăн призывĕ

Çак кунсенче пур хаçатсенче те „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн речĕсенчен срукла службăра пулнă рядовойсене, кĕçĕн командирсене тата начальниксене вăрăм срукла отпуска ярасси çинчен“ тата „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн черетлĕ призывĕ çинчен“ ССР Союзĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн, Совет Союз маршалĕн К. Й. Ворошиловăн приказĕ пичетленсе тухрĕ.

Тепĕр пилĕк кунран призыв комиссийĕсен алăкĕсем уçăлаççĕ. Призыва аслă Октябĕр тантăшĕсем—1917—18-мĕш çулсенче çуралнă çамрăксем кĕреççĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне телейлĕ те савăнаçлă ĕмĕрте, сталинла саманара ӳссе çитĕннĕ, коммунистсен партийĕ, Аслă Сталин пăхса ӳстерне çамрăксем, çĕршывăн хĕрӳлĕ патриочĕсем хутшăнаççĕ.

Совет çамрăкĕсем призыва пысăк хавасланăхпа кĕтсе илеççĕ. Кашни çамрăк Хĕрлĕ Çара кайма ĕмĕтленет...

„Пурне те тивĕç çар обязаннăçĕ—саккун пулса тăрать.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар служби—ССР Союзĕн граждансен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать“,—тенĕ Сталинла Конституцин 132-мĕш статьинче. Çак ылтăн сăмахсене пирĕн çамрăксем ялан чĕрере тытаççĕ, вĕсем нумайĕшĕ Хĕрлĕ Çара хăйсен ирĕкĕпе вăхăтчен малтан кайма васкаççĕ.

Йапони самурайĕсем Хасан кӳлли патĕнче пирĕн чикĕ çине провокацилĕ тапăнусем тунă кунсенче Хĕрлĕ Çара вăхăтчен малтан илмешкĕн ыйтса çамрăксем çар комиссариачĕсене нумай заявленисем пачĕç. Пĕр Шупашкарти çар комиссариатне кăна 167 заявлени панă.

Вырăс Алгаш ялĕнчи (Çĕмĕрле р.) призывник Иван Самойлăв йулташ хăйĕн заявленинче çапла çырать:

„Епĕ 1917 çулта çуралнă çамрăк. Йапони самурайĕсем ирсĕр провокацисем тунине илтсен, призыва пуличченех хам ирĕкпе совет чиккине сыхлама Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтатăп. Çак чысла ĕçре епĕ мĕн пур вăйа, кирлĕ пулсан, пурнăçа пама хатĕр“. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çара кайакансен кăмăлĕ.

Хĕрлĕ Çара совет халăхĕ вĕçĕмсĕр юратать.

„Пирĕн патăрта çара юратаççĕ, ăна хисеплеççĕ, уншăн тăрăшаççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен рабочисемпе хресченсем тĕнчере малтанхи хут хăйсен паттăр çарне тунă, вăл çар господасене мар, хăличчен чура пулнисене, халĕ ирĕке тухнă рабочисемпе хресченсене хӳтĕлет“. (Сталин).

Пирĕн Хĕрлĕ Çар çирĕплĕх, хăюлăх, паттăрлăх шкулĕ. Кунта совет çамрăкĕсем çĕнĕ çар техникипе паллашаççĕ, тĕрлĕ ăсталăхсене вĕренеççĕ, хăйсен политикăлă пĕлĕвне, культурине ӳстереççĕ.

Хасан кӳлли патĕнчи тытăçусем вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар мĕнле паттăр çамрăксем вĕрентсе çитĕнтернине пĕтĕм тĕнче курчĕ. Пулеметчик Краснойарăв хăй пĕччене Йапони самурайĕсен пĕр роттине çĕр пичĕ çинчен тасатнă. Вăл, хăй аманнă пулсан та, тăшмана тĕп тăвиччен пулемет патĕнчен пăрахса кайман. Çакăн пек тĕслĕхсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн кашни бойецĕ, кашни командирĕ тăван çĕршывшăн пурнăçне хурĕ, анчах совет çĕрĕн пĕр пĕчĕк пусăмне те тăшмана памĕ. Çакăн пек паттăр çынсене çитĕнтерет пирĕн Хĕрлĕ Çар.

Хĕрлĕ Çар вăрçă хăрушлăхĕ çине тӳррĕн пăхать, унтан хăрамасть. Хĕрлĕ Çар хыçĕнче çĕр çитмĕл мĕлйуна халăх тăрать. Пирĕн çине тапăнакан тăшман ăçтан тухнă, çавăнтах хăй вилĕмне тупĕ.

Хĕрлĕ Çара чаплă çынсем хутшăнаççĕ. Пуйан та культурăлă пуранакан ĕççыннисен ывăлĕсем—çирĕп сывлăхлă, хут пĕлекен çамрăксем—призыва ним хуйхă-суйхăсăр, савăнаçлăн кĕреççĕ. Призыва хатĕрленнĕ май, вĕсем нумайĕшĕ ворошиловла тĕл пемели, ГТО, ПВХО тата ытти нормăсене те панă.

Фашисла çĕршывсенче çамрăксем выçăллă-тутăла пурăнса, хĕн-хур тӳссе ӳсеççĕ. Çавăнпа унта çара юрăхлă çынсен шучĕ çулленех чакса пырать. Германире 1935 çулта призыва кĕрекен çамрăксене сывлăх начаррипе 7,32 процент, 1936 çулта 11,47 процент пăрахăçланă. Йапонире çакăн пек пăрахăçлани 40 процента çитет.

Фашиссем хăйсен салтакĕсене етем вырăнне хумаççĕ, патак айĕнче усраççĕ, обществăлă пурнăçран айакра тытаççĕ.

Çавăн пекех пулнă салтаксен пурнăçĕ патша Российĕнче те. Патша çарĕн казармисем тĕрмерен те тискертерех пулнă. Çынран казармăри пек мăшкăлани, хĕнени, хĕстерни, асаплантарни урăх нихçăта та пулман. Çавăнпа ĕнтĕ ĕлĕк салтака ăсатнă чухне амăшĕ амăшĕсем хăйсен ывăлĕсемшĕн ӳксе макăрнă, чĕререн кулйаннă.

Ĕлĕкхи кичем, хурлăхлă, куççулĕпе тулнă ăсатусем ĕмĕрлĕхех пĕтрĕç. Халĕ пирĕн халăх хăйĕн юратнă ывăлĕсене Хĕрлĕ Çара хаваслансах ăсатать.

Призыв пуличчен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Призыв—вăл государствăн политикăлла пысăк ĕçĕ. Хĕрлĕ Çара пирĕн юрăхлă çынсене çеç ямалла. Тăшмансем, юрăхсăр етемсем нихăçан Хĕрлĕ Çарта вырăн çук.

Партипе совет, комсомол, профсоюз организацийĕсен хисеплĕ ĕçĕ вăл—призыва чаплă, йĕркелĕ ирттересси пулать. Кăçалхи çул призыва иртнĕ çулсенчен лайăхрах тата йĕркелĕрех ирттермеле. Призыв комиссийĕсем ĕçлемели пӳлĕмсем çутă, таса, илемлĕ пулмалла. Призыв пункчĕсенче массăллă ăнлантарулă ĕçе тивĕçлĕн йĕркелемеле. Уйрăмах кунта комсомол организацийĕсем хисеплĕ вырăн йышăнмалла. Хĕрлĕ Çара кайакансене савăнаçлăн, йĕркелĕн ăсатар, Хĕрлĕ Çарăн тĕрекне, хăватне татах ӳстерме пĕтĕм кăмăлтан вĕсене ырă сунар.

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Сессийĕ

Союз Совечĕпе Национальнăçсен Совечĕн 1938 çулти августăн 21-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи ларăвĕ

Ç. К. КОРОТКОВ депутат сăмахĕ

Депутат йулташсем! Украинă Советлă Социалисăмлă Республĕкĕнчи депутатсен ушкăнĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине 1939 çулти августăн 1-мĕшĕнче уçасси çинчен панă сĕнӳпе епĕ пĕтĕмпех килĕшсе хапăл тăватăп.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки государствă тата политикă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен вăл выставкă пирĕн çĕршывăн ялхуçалăхĕнче пулнă, тĕнче историнче пысăк вырăн йышăнакан улшăнусене пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса памала, ку çĕршывăн хуçисем—рабочисемпе хресченсем пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршыври социалисăм строительствин пĕтĕм аслă ĕçне большевиксен мухтавлă коммунисла партийĕ йертсе пырать. Вăл йертсе пынипе Марксăн — Енгельсăн — Ленинăн—Сталинăн аслă вĕрентĕвĕ вĕçне çитиех пурнăçа кĕрсе пырать. (Тавăллăн алă çупаççĕ).

Аса илĕр-ха, патша Российĕнче ялхуçалăхĕ мĕнле пулнине. Çукăлăх, выçлăх, тĕттĕмлĕх, правасăрлăх—акă мĕнле пулнă вăл вăхăтри хресченсен пурнăçĕ.

Революциччен ялта помещик, кулак, пуп тата уретник пуç пулса пурăннă. Вĕсем хресченсене пусмăрланипе тата експлоатацилениипе пуйса, ĕççыннисен юнне ĕмсе капиталсем пухнă.

Ырхан лаша, йăвăç сухапус, сӳре, çурла—акă революциччен ялхуçалăх производствин хатĕрĕсем.

Епĕ старик мар, анчах та астăватăп: пирĕн Кольцовкă ялĕнче шутланса тăнă 200 хуçалăхран 160 хуçалăх выçăлла-тутăла пурăннă. Çав хуçалăхсен тырри нумай-нумай сурхуриччен çеç çиме çитнĕ. Чăваш республикĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра 60 çулхи колхозник Андрей Ашанин çакăн пек каласа пырать: „Епĕр, хамăр ялти 20 çын, 1913 çулта Самара, помещик патне ĕçлеме кайрăмăр. Уăх çурă хушши ир пуçласа сĕм çĕрлеччен утă çулнă çĕрте ĕçлерĕмĕр. Çавăншăн помещик пире пăнтăхнă какайпа çеç тăрантарса усрарĕ. Вара пирĕн ертелрен пĕри çакăн пек етемле мар пăхнăшăн чăтаймасăр, тарăхса кайсан, пире пурне те пристăв патне ăсатрĕç. Унта пире виçĕ кун хушши выçă тытса усранă хыççăн, хăваласа кăларса ячĕç. Çав ĕçшăн пире пĕр пус та тӳлемерĕç“.

Акă мĕнле хăрушă условисенче пурăннă хресчен Октябĕрти Аслă социалисăмлă революциччен.

Депутат йулташсем! Йепле улшăнчĕ пирĕн пурнăç! Ленин—Сталин партийĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕ аслă Сталин çул кăтартса йертсе пынипе, ялхуçалăхне социалисăмла çĕнтерсе улшăнтарассишĕн кĕрешӳ сарса йанине пула саппаланчăк хресчен хуçалăхĕсем колхозсене пĕрлешрĕç. (Алă çупаççĕ).

Йăвăç сухапуçĕ, йăвăç сӳре тата çурла вырăнне колхоз уй-хирĕсенче сталинла тракторсем, комбайнсем тата автомашинăсем кĕреççĕ. Ĕççынни хресченĕсен ĕмĕрхи ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ. Колхозсем халь ĕмĕрлĕхех усă курма тӳлевсĕр çĕр илчĕç. Ялхуçалăхне механизациленине пула тата унта çĕнĕ агротехникă ĕçĕсемпе усă курнине пула, стахановла юхăм вăй ланса пынине пула колхозсем халиччен пулман пысăк тухăçлă тырпул туса илме пуçларĕç. Сталин ячĕпе тăракан пирĕн колхоз 1936 çулта, çанталăк уйар пулнă условисенче, çĕнĕ агротехникăла ĕçсемпе вăл шутрах халиччен те кĕнекесем çине çырман агротехникăлă ĕçсемпе уса курнине пула, колхозăн 600 гектар акмали çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 100 пăт тырă туса илчĕ. Революциччен тырă лайăх пулнă çулта та çав çĕр çинче гектартан 40 пăт тырă çеç тухнă. 1937 çулта колхоз халь ĕнтĕ 700 гектар шутланакан акмали çĕр лаптăкĕнчен вăтам шутпа гектартан 180 пăт тырă туса илчĕ. Селĕ акна 200 гектар çĕр лаптăкĕнчен вăтам хисеппе гектар пуçне 40 центнĕр илтĕмĕр. Çак вăл хура тăпраллă мар тăрăхри условисенче.

Халь ĕнтĕ пирĕн çĕршывра колхозниксем—кирек мĕнле климăт условийĕсенче те пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулать, тесе хăйулăнах çирĕплетме пулатраççĕ, çакна вĕсем хăйсен практикипе кăтартса пачĕç. Чăваш АСС Республикĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 1937 çулта колхозниксене кашни ĕçкунĕшĕн 13-шер килограм тĕштырă пачĕ; 100 колхозник хуçалăхĕ 300 пăтран пуçласа 400 пăт таран, 100 хуçалăх—400 пăтран пуçласа 1 000 пăт таран тырă илчĕç. Ĕлĕк батрак пулнă колхозник Йефим Йерошин 800 пăт тырă илчĕ.

Çак вăл колхоз хресченĕсен материаллă пурнăçĕ калама çук пысăккăн, татти-сыппиcăр лайăхланса пынине уççăн кăтартса парать.

Депутат йулташсем! Епĕ хамăр колхоз пурнăçĕнчи примерсене илсе кăтартатăп, мĕншĕн тесен епĕ унта 9 çул хушши ĕçлерĕм тата мĕн пур колхозниксемпе пĕрле Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хатĕрлентĕм. Епĕ хăйулăнах çапла калама пултаратăп: Сталин ячĕпе тăракан колхоз хăйĕн çитĕнĕвĕсем тĕлĕшпе пĕр пĕччен колхоз çеç шутланмасть, Чăваш республикĕнче, пирĕн пĕтĕм аслă Союз пекех, питех те лайăх ĕçлекен колхозсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Чăваш АСС Республикĕнчи колхозсем 1937 çулта республикĕпе вăтамран гектар пуçнĕ 97 пăт тĕштырă пуçтарса илчĕç. Çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илесси çинчен Сталин йулташ панă заданине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе колхозсем калама çук пысăк çитĕнӳсем тунă факт вăл—пирĕн аслă çĕршыври ĕççыннисем социалисăмлă ялхуçалăх тухăçне вĕçĕмсĕр ӳстерсе пыни çинчен калать.

Ĕлĕкхи патша вăхăтĕнче ялхуçалăхĕн çавăн пек тухăçлăхĕ çинчен ĕмĕтленме пулнă-и ха! Ан тив, капиталисăмлă çĕршывсенче буржуазипе помещиксем халь ĕнтĕ пирĕнпе танлашма хăтланса пăхчăр!

Колхозниксем çав çитĕнӳсене пирĕн атте тата учитĕл—аслă Сталин колхозсемпе колхозниксемшĕн кунсеренех ырми-канми тăрăшнине пула турĕç. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн колхозниксен культурăлă пурнăçĕ татти-сыппиcĕр ӳссе пырать. Хулапа йул хушшинче уйрăмлăх пĕтсе пырать. Хальхи вăхăтра колхозсенче ытарайми паха оборудовани тунă шкулсем, колхоз клубĕсем, вулав çурчĕсем, театрсем, ача яслисемпе площадкисем, пульницăсем, електростанцисем тата сасла кино пур.

Пирĕн колхоз ем культурăлă, пуйан пурăнма пуçларĕç. Пирĕн колхозниксем зажиточнăй пулса тăчĕç. Акă мĕншен ĕнтĕ пирĕн халăх ССРС Верховнăй Советне, союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйланă чухне, коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, Ленин—Сталин партийĕшĕн, халăха телейлĕ, пуйан та культурăлă пурнăç туса панă çыншăн—Сталин йулташшăн сасăларĕ. (Пĕтĕм зал шавлăн алă çупать).

Епĕ хамăр патра ялта çакна сăнарăм: ĕлĕк хресчен, ирхине килтен тухса кӳршĕ çыннипе тĕл пулсан, унпа вăл, пуринчен ытларах, çемйене тăрантарма мĕнле майпа çăкăр тупасси çинчен калаçнă. Хальхи вăхăтра колхозник, кӳршĕ çыннипе тĕл пулсан, чи малтанах паян радио тăрăх мĕнле хыпар пани çинчен каласа кăтартать. Италипе Германин фашисла интервенцине хирĕç хăй никама пăхăнмасăр ирĕклĕ пурăнассишĕн паттăррăн кĕрешекен Испани халăхĕ çинчен, Йапони захватчикĕсене хирĕç пархатарлăн кĕрешекен аслă Китай халăхĕ çинчен калать вăл. Вăл Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ ялавлă фронт бойецĕсем Йапони самурайĕсене аркатса тăкмалах отпор пани çинчен мăнаçлăн каласа кăтартать.

Ĕлĕк ялта хырăм шăлакан карчăксемпе йумăçсем „специалистсем“ шутланнă. Халь кашни колхозникех чăн-чăн специалист пулма пултарать. Колхоз çамрăкĕсем летчиксем пулма, инженерсем, врачсем, учительсем, агрономсем, бригадирсем пулма вĕренеççĕ. Сталинла Конституци пирĕн çĕршывра мĕн пур ĕççыннисене вĕренӳ прави пачĕ. Хальхи кам тăрăшать—вăл вĕренме тата хăйĕн таланчĕсене ӳстерме пултарать. Учонăй-селекционерсем ялтах тĕрĕс шухăшлаççĕ, çĕнĕ суртлă вăрлăхсем тăвас тесен пучахсене чăтăмлăн суйласа илсе вĕсене шăркана лартас пулать. Вара çĕнĕ суртлă вăрлăхсем туса илетпĕр. Сталин йулташ аслă селекционер пулса тăрать. Вăл пирĕн çамрăксене суйласа илет, вĕрентсе воспитани парать, вара Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăмшăн кĕрешекен çĕнĕ кадрсем тăвать. (Нумайччен шавлăн алă çупаççĕ).

Об-р-бандитсем — фашисăмăн троцкисла-бухаринла тарçисем пирĕн социалисăмлă çĕршыври рабочисемпе хресченсен майĕ çине капиталисăм пусмăрĕ тăхăнтартасшăн пулнă, çĕре помещиксен аллине таварса парасшăн, совхозсемпе колхозсене салатса ярасшăн пулнă. Анчах вĕсем пысăккăн янăшрĕç! Аслă Совет Союзĕнчи халăх сталинла нарком Николай Иванович Йежов (пĕтĕм зал шавлăн алă çупать) йертсе пыракан мухтавлă наркомвнуделĕсем пулăшнипе фашисăм тарçисене пуçса лапчăтрĕ. Троцкисла-бухаринла ирсĕрсем темле маскăпа витĕнсен те, вĕсене халăх пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пырать.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки социалисăмлă ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсене чи туллинрех палăртса памала, тесе шутлатăп епĕ. Вăл пирĕн çĕршывра ĕлĕк мĕн пулнине тата халь мĕн пулса тăнине тĕрĕс кăтартса памалла. Малта пыракан колхозсемпе колхозниксен опытне пирĕн пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăмала тăвас пулать. Епĕ çапла шутлатăп: пирĕн ялхуçалăх выставки—хуçалăхăн капиталисăмлă системине тата пĕтĕм капиталисăма вĕлермелех пырса тивмели критикă пулĕ, вăл выставкăра капиталисăмлă çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсем хуçалăхăн социалисăмлă системи вăл мĕн иккенне, социалисăм мĕн иккенне курĕç. Вĕсем çавăн пекех хăйсем патĕнче те хăйсен помещикĕсемпе капиталисĕсене хăваласа ярса, пирĕн пример тăрăх социалисăм туса кирлине ĕненĕç.

Пирĕн Чăваш Республикĕнче 1.688 колхозран (1937 çулхи кăтартусем тăрăх) Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине 800 колхоз хутшăнма пултараççĕ. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки сталинла 7—8 мĕлйард пăт тĕштырăшăн кĕрешнĕ çĕрте пирĕн пĕтĕм Совет Союзĕн колхозсен чăн-чăн социалисăмлă ăмăрту ялавне татах та çӳлерех çĕклĕ.

Депутат йулташсем! Епĕр тĕнчере чи малта пыракан, чи шутра социалисăмлă ялхуçалăхĕ туса хутăмăр. Çакна никам çĕнтерейми большевикла парти йертсе пынипе, аслă Сталин çул кăтартса пынипе çĕнсе илнĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн ялхуçалăх выставки—пирĕн пĕтĕм çĕршыв ялхуçалăхне çĕнĕ, çӳлĕ пусăма çĕклентерсе яма пулăшакан чи лайăх тĕслĕхсене пухакан вырăн пулса тăтăр. (Алă çупаççĕ).

Çамрăк патриотсем Хĕрлĕ Çар призывне хатĕр

ХАБАРОВСК. Оборонă Халăх Комиссарĕ Хĕрлĕ Çар призывĕ çинчен кăларнă приказа Горький ячĕпе тăракан савăтри допризывниксем хаваслăн кĕтсе илнĕ. Пулас бойецсем 220 çын специальнăй хатĕрленӳ витĕр тухнă. Вĕсенчен 56 çын—ворошиловла тĕл перекенсем, 18 çын—ГТО значокĕ илмели нормăсене парса татнă, 82 çын—ПВХО значкисем. Нумайăшĕсем производствăрах тăтăлмасăр вĕренсе, летчиксем парашютистсем пулса тăнă.

Кăçалхи çул Хĕрлĕ Çара кайакан çамрăксем призыв кунне чăтма çук хаваслăн кĕтеççĕ. Електромонтер Зайцев йулташ çапла калать: „Хам Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ ялавлă фронта кайасси пулсассăн, мухтавлă погранничниксемпе пĕрле социалисăм çĕршывне сыхлакан пулсассăн мухтанатăп“.

(ТАСС).

Харькăври çамрăксем çар училишчисене туртăнаççĕ

Харькăв хулинчи çар комиссариатне çар училишчисене вĕренме илме ыйтса 1200 заявлени ытла панă.

Пурничен ытла авиаци, бронетанк, артиллери училищисене нумай заявленисем панă. Украинăри физкультурă институчĕн студенчĕ Жалин йулташ хăйĕн заявленинче çапла çырать:

— Епĕ летчик-сăнавçă пулас шăн. Мана çар училищине вĕренме илме ыйтатăп. Планерпа вĕçме пĕлетĕп, стандартлă пулеметпа пеме пĕлетĕп.

Сталин ячĕпе тăракан бронетанк школĕнчи вĕренекен курсантсене илмелли куллишене кĕртмен Поповсем—ашшĕ, Никита тата Федăр пур. Вĕсем, кĕртĕнин Махновасем пример тăрăх, школтан вĕренсе тухсан кĕртĕнин Поповсен танк екипажне тăваççĕ.

(ТАСС).

„И. Сталин“ пăрçĕмрен пĕрремĕш рейса тухнă

Августăн 23-мĕшĕнче каçхине Ленинградран „И. Сталин“ пăрçĕмрен—Арктикă флотĕн флагман карапĕ—пĕрремĕш рейса тухнă.

Пăрçĕмрен тинĕсе вишсе кайнă йатпа Ленинградри портра чаплă митинг пулса иртнĕ, унта пăрçĕмрене тунă çынсем—Орджоникидзе ячĕпе тăракан Балтийски савăтри рабочисем, Ленинградри общественноçç представителĕсем пулнă. Тинĕслĕхсем, нумайччен чарăнмасăр алă çупса митинг Сталинпа Жданăв йулташсем патне салам йана йышăннă.

* * *

„И. Сталин“ пăрçĕмрен—тĕнчере чи пысăк та вăйлă пăрçĕмрен. Унăн вăрăмăшĕ—106 метр, „Красин“ пăрçĕмренрен 10 метр вăрăмрах, сарлакăшĕ—23,2 метр, карапăн шыва путса тăракан пайĕ—10 пин кубла метр. Унăн машинă пайĕнче—пăспа ĕçлекен виçĕ машинă, вĕсен пĕтĕм вăйĕ—10 пин лаша вăйĕ чухлĕ. Пăрçĕмрен çинче чи лайăх та чаплă навигаци хатĕрĕсем тата вăйлă радио ĕçлет. Пăрçĕмрене шалтан пит чаплă илемлетсе тунă.

Карап команди 140 çынтан тăрать. Карап капитанĕ — полярта ишекен паллă капитан-орденоносец В. И. Воронин.

(ТАСС).

Газогенераторлă автомобильсен колонни Минскра

Августăн 24-мĕшĕнче Газогенераторлă автомобильсен чупăвĕнче çынсене пуçтарнă Белоруссии столици кĕтсе илнĕ. Ленинградпа Минск хушшинче 1.026 километра кал кун çурăра чупса тухнă. Минскра вăйăта пĕр минут та сипа йамасăр, колоннă çунтармали машинсем тултарса Кийĕва çул тытнă.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

** Куйбышĕв облаçĕнчи колхозсен уй-хир станĕсенче 35 сасăллă тата 130 сасăлă мар кинопередвижкăсем ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем 67 сасăлă тата 134 сасăлă мар кинофильм курнă та ĕнтĕ.

** Башкирийĕнче, Давлекановски районĕнчи „Яктау“ колхозри колхозник Ахметăв йулташ сăнама майĕпе пĕр гектар рис акнă. Рис пучахлама тытăнать те ĕнтĕ. Унăн çӳллĕшĕ 80—90 сантиметр. Тухăçĕ 50 центнĕр пуласине кĕтеççĕ.

Пулă тытакан миллионер-колхозсем

Астрăхань округĕнче пулă тытакан миллионер-колхозсем пĕлтĕрех 8 пулнă. Паллă пулăç РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Кузнецовă йулташ çуралса ӳснĕ ялти „Коммунар“ колхоз пулă тытса 1.632 пин тенкĕ доход илнĕ.

Кăçал çуркунне пулă тытнă вăхăтра колхозсем татах та пысăкрах доходсем илнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз пĕрремĕш çурçулта 1.791 пин т.—пĕлтĕр пĕтĕм çулталăкра илнинчен нумайрах доход илнĕ. Миллионер-колхозсен шучĕ кăçал чылайах ӳсет.

Пулăç-колхозниксен ĕçукçи нумай пысăкланнă. Çуркунне пулă тытнă вăхăтра 168 бригадир кашниех 3.000-шер тенкĕрен кайа мар ĕçлесе илнĕ. Сĕреке бригадин бригадирĕ Морозăв йулташ 10.400 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Округри пулă тытакан 4 районра пысăк строительствăсем пыраççĕ. Кăçалхи çул 33 клуб, 16 пульниçа çурчĕ тата хĕрлĕ кĕтессем, 26 мунча, кĕпе-йĕм çумалли тата тасатмалли пĕтмелисем, ачасене пăхмалли 1[illegible] учреждени, ача çуратмалли 15 çурт тăваççĕ. Йулашки икĕ çул хушшинче 19 колхозра електростанцисем тунă. Кăçалхи çул [illegible] ялĕнче електростанци, 200 пин тенкĕ ытла тăракан клуб тата ача çуратмалли çурт тăваççĕ.

(ТАСС).

Тăрăшса ĕçлени кирлĕ

Ишекри (Ишлей р.) Сталин ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕчĕ, вăрлăхлăх хăварнă „клеверĕ те вăхăтра çулса пуçтарнă.

Кĕрхи тырăсене акма августăн 19-мĕшĕнче тухнă. Вăрлăхсем пурте суртлисем. Вĕсене вутпуç сирен чÿхенĕ. Августăн 21-мĕшне бригадăсенче 84 гектар кĕрхи тырăсем, вăл шутран 34 гектар кĕрхи тулă акнă. Кашни бригадăрах пĕрер çейăлкă. Кăçал колхоз кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех çейăлкăсемпе акса хăварать. План тăрăх 549 гектар ыраш, 50 гектар тулă акса хăвармала.

Колхоз тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕнĕ пулсан та авăн çапас, государствăна тырă парас йĕнĕпе кайа йулса пырать. Августăн 22-мĕшне 259 гектар çинчи тырпулсене çапнă, государствăна тырă тăратмалли обйазательствăна 51 процент çеç тултарнă, машинă-тракторлă станцине натурплатă пачах паман. Апла пулсан та Ишек колхоз правленийĕ колхозниксене ĕç кунĕсем тăрăх 2-шер килограм авансла валеçсе пама тытăннă. Çапла ĕнтĕ Ишек колхозĕ государствăна тата МТС-не тырă парса татмасăрах тырпула салатма пуçăннă.

Колхозра МТС-ин икĕ сложнăй молотилкă ĕçлеççĕ. Анчах, машиниссем пĕр çменăра 500 килограм таран çеç çапаççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсем машинă техникине тĕплĕн пĕлмеççĕ. Çитменнине тата вĕсен хушшинче дисциплинă начар.

Ишлейри машинă-трактăрлă станцин трактăриссемпе машиниссен хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплететтессишĕн çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Ишек колхозĕнче стахановĕçсене шута илсе пыни çук.

— Стахановĕçсене шута илсе пыман, вĕсем пирĕн пулмала,— теççĕ правленинче ĕçлекенсем. Çапла кунта стахановец-колхозниксене пĕлмеççĕ. Чĕннипех илсе пăхсан, вĕсем колхозра пур. Акă, 7-мĕш бригадăри И. Степанав кашни çменăра 10-шар гектар вырса пынă. Вăл лĕр пĕччен кăçал 70 гектар тырă вырнă. П. Лоцманăв машиновед та йаланах 8-шар гектар вырнă. Жнейкăпа вырнине çыхас, кĕлтесем турттарас тата ытти ĕçсенче те стахановла ĕçлекенсем пулнă. Анчах вĕсем колхоз правленишĕн паллă мар. Çак тĕслĕх ĕнтĕ Ишек колхозĕнче социалисăмлă ăмăртăва пуçарса пыманнине пит те лайăх кăтартса парать.

Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхоз „Алино" колхозпа ăмăртать. Анчах ăмăрту договăрне йепле пурнăçа кĕртсе пынине тырпулсене вырма тухнăранпа тĕрĕслемен. „Алино" колхоз та авăн çапас, государствăна тырă парас йĕнĕпе йулса пырать. Ку колхозра пĕрремĕш бригадă хальтте кĕлтесене турттарса капана хывса çитермен. Колхозăн пур культурăсем тăрăх та государствăна тырă парса татмалли майсем пулнă. Колхозăн автомашинă та пур.

„Алино" колхоз иртнĕ çулти натурплатă тыррине хальтте парса татман. Кăçал та çавнашкалах пĕр пĕрчĕ те паман.

Колхоз кĕрхи тырăсене акма августăн 19-мĕшĕнче тухнă. Анчах ку ĕçре пысăк чăрмав пур. 32 гектар çинче кĕрхи тулă акса хăварма суртлă вăрлăх çитмест. Çав вăрлăха Тăрăнти колхозпа улăштармала.

Ишек тата „Алино" колхозсен авăн çапас, государствăна тырă парас йĕнĕпе татăклă улшăну тумала. Кĕрхи тырăсене пысăк пахалăхпа акса хăвармала.

Гр. Калинин.

Итем çинче шанчăклă хурал пулмала

Колхозсем çулран-çул политикăпа хуçалăх йĕнчен вăйланса, çирĕпленсе пынă май, вĕсен тупăшĕсем те куллен-кунах ÿссе пыраççĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозсем уйри тырпула итем çине кĕртсе авăн çапас ĕçе тытăнчĕç. Çакăнта ĕнтĕ—колхоз итемĕ çинче темиçе пиншер тенкĕлĕх пурлăх шутланать. Çак пурлăха сыхласси пысăк та ответлă ĕç пулса тăрать.

Анчах, Çĕрпÿ районĕнчи чылай колхозсенче итем çинче хурал тăрас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Итем çинче хурал тăрасси çăмăл ĕç тесе, ытла та ватă пирки ĕçлеме пултарайманнисене уйăрса параççĕ.

Нĕрĕш йалсоветĕнчи „Малалла" колхозра виçĕ итем çине те хăлхасăр, 75—80 çулхи ватă старниксене тăратнă. Патăрйел йалсоветĕнчи „13 лет Октября" колхозра 75 çултан иртнĕ старике хурал тăма хушнă.

Колхоз хуралçисене шанчăклă çынсене уйăрса лартмала. Колхоз пурлăхне куç шăрçине сыхланă пек сыхламала.

С. Павлăв.

Молотилкăна ĕççĕр лартаççĕ

Шурчакассинчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз (Шупашкар р.) çуртрисене вырса пĕтернĕ. Хальку колхозра МТС молотилкипе авăн çапаççĕ. Молотилкă йусавсăр пирки малтанхи кунсенче ĕçлеймесĕр ларчĕ. Пурăна киле ăна йусаса çитерчĕç. Анчах молотилкă çавах час-часах ĕççĕр тăрать. Августăн 18-мĕшĕнче бригадирсем çынсене çителĕклĕ кăларман пирки 3—4 сехет хушши ĕççĕр ларчĕ. Бригадирсем авăн çапнă çĕре тухса та пăхмаççĕ, ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелеме тăрăшмаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, малтанхи кунсенче машинă МТС айăпĕ пирки ĕçлеймерĕ, хальколхоз айăпĕ пирки йĕркеллĕ ĕçлеймест.

А. Моисеев.

Аш-какай парас ĕçре татăклă улшăну тумала

Пирĕн республикăра государствăна аш-какай парасси йулса пырать, правительствă заданине пурнăçлавса пымасть. Июль уйăхĕнче государствăна аш-какай тăратмалли плана Чăваш республикĕ тăрăх 58 процент çеç тултарнă, август уйăхĕнче аш-какай парас хăвартлăх тата та чакнă. Августăн 15-мĕшне виççĕмĕш кварталри аш-какай памалли плана 50 процент ытларах тултармала пулнă пулсан, августăн 20-мĕшне мĕн пурĕ те 36,5 процент çеç тултарнă, çулталăк планне 45,8 процент кăна тултарнă. Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпÿ, Хĕрлĕ Чутай районĕсем государствăна аш-какай тăратас йĕнĕпе пит начар ĕçлеççĕ.

Йулашки вăхăтра государствăна аш-какай парас хăвартлăх чакни ĕнтĕ районсенчи организацисем, Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсем тата йалсоветсем государствăна аш-какай парассине тырă тăратассипе çыхăнтарса пыманнине кăтартса парать. Чылай районсем ку ĕçе айкине тăратса хăварнă.

Чылай районсенче тата колхозсенче государствăна аш-какай тăратассипе ĕçлеме пăрахнă тесен те йăнăш пулмасть. Самахран, Вăрмар районĕ виççĕмĕш квартал планне мĕн пурĕ те 16 процент ытларах çеç тултарнă.

Правительствă кăçал кĕркунне çитес çулшăн 40—45 процентран кайа мар государствăна аш-какай тăратма ирĕк панă. Кунсăр пуçне тата пирĕн 1938 çулхи плана кĕркунне тултармала. Çакă ĕнтĕ районти организацисенчен тата йалсоветсемпе колхозсенчен государствăна аш-какай тăратассипе чăнчăнах большевикла ĕçлеме ыйтать.

Районсенче ку вăхăтченех государствăна аш-какай тăратассипе йединоличниксене çăмăллăхсем парассине пĕтермен. Йединоличниксем аш-какай парас йĕнĕпе ытла та кайа йулса пыраççĕ.

Государствăна аш-какай тăратассипе татăклă улшăну туни кирлĕ. Ку ĕçе государствăна тырпул парас ĕçсемпе çыхăнтарса пырас пулать.

Е.

Государствăна аш-какай памалли плана августăн 20-мĕшне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан сводкă

РАЙОНСЕМ	Процентпа: Çулталăк планне	Процентпа: Виççĕмĕш квартал планне
Улатăр	68,1	39,5
Елĕк	46,4	40,1
Патăрйел	53,1	52,5
Вăрнар	47,7	53,0
Йĕпреç	46,4	45,6
Ишлей	46,7	30,9
Канаш	47,0	44,8
Куславкка	34,0	22,5
Хĕрлĕ Чутай	40,9	45,4
Кувакинă	56,3	44,3
Сĕнтĕрвăрри	29,9	21,4
Пăрачкав	41,2	27,0
Турхан	45,0	49,7
Тутаркас	52,6	38,7
Трак	42,7	25,8
Вăрмар	25,7	16,9
Çĕрпÿ	40,4	25,6
Шупашкар	46,8	39,0
Шăмăршă	53,5	51,2
Шăхасан	49,1	37,7
Шăнкăртам	63,3	53,0
Çĕмĕрле	44,3	34,4
Йетĕрне	51,7	41,8
Йелчĕк	51,8	19,0
Тăвай	50,3	33,2
Республикĕпе:	45,8	36,5

Сталинори сăрт-ту техникумĕнче стахановĕçсене Промакадемине кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе 2 уйăхлăх курс организациленĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: курсра вĕренекенсем (сылтăмран) УССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ И. И. Брийко, „Краснăй Октябĕр" шахтăри стахановец А. Саламатин, 10-мĕш шахтăри участăк начальникĕ (снежнянантрацит) М. Прудникăв занятире. Л. Лютрацвик фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Искусствă кадрĕсем çитĕнтерес ĕçре кăлтăксем ан пулччăр

Колхозлă йалăн культури пысăк утăмсемпе малала кайса пырать. Колхозниксен пуйан та культурлă пурнăçĕ ĕçри савăнăçлă йурă-кĕвĕре илтĕнет.

Сталинла тапхăр халăхăн шухăш-кăмăлне çĕклентерет. Пурнăç—лирикă. Халăх савăнăçĕпе пĕрлех, Чăвашсен Аслă Октябĕрте шăтса чечекленнĕ социалисăмла содержанилĕ, формă тĕлĕшĕнчен наципилĕ искусстви те хăвăрттăн ÿсет. Пирĕн республикăра 3 колхоз театрĕ, 316 драмкружок, хор кружокĕсем 207 пур тата ытти те.

Çакă ĕнтĕ телейлĕ ÿсекен совет çамрăкĕсене пушшех те искусствăпа таччăн çыхăнтарать. Туллимар вăтам шкулсенчен тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăксем нумайĕшĕ музыкăпа театр специалисĕсем пулма ĕмĕтленеççĕ. Кăçал Чăвашсен музыкă училищине вĕренме кĕрес тесе 250 ача на йахăн ыйту панă.

Кăçал музыкă училищи çĕнĕ вĕренÿ çулне кĕтсе илме аван хатĕрленнĕ теме йурать. Училищă çуртне тата студентсем пурăнмалли общежитисене йусаса питех те хÿхĕм сăрласа илемлетнĕ.

Музыкă инструменчĕсене—рояльсене тата ыттине те йĕркелĕ йусаттарса хунă. Вĕренÿ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе училищă администрацийĕ уйрăмăнах завхоз Борзов йулташ тăрăшса ĕçленине палăртмала.

Анчах пĕр çитменлĕх пур. Вăл—преподавательсем çитменни. Пайанхи куна училищăра музыкă историне вĕрентекене тупман-ха. Композиторсен отделенийĕ вальти те шанчăклă, пĕлекен çын тупман. Халиччен композици предмечĕпе вĕрентекен Прохоровран пахă вĕренÿ тата ачасене тĕрĕс воспитани парассине кĕтмели çук. Вăл Ленинграда та Петербург теме пăрахман-ха.

Иртнĕ çулсенче искусствă таврашĕнче халăх тăшманĕсем—буржуалă-националиссем ларнине пула училищăн преподавательсем çителĕксĕр пулнă, йе пурри те çирĕп состав пулман. Кăçал ку çитменлĕхсем пулмала мар. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствăсен комитечĕпе училищă администрацийĕн училищă вальли çак кунсенчех преподавательсем çителĕклĕ тупса хатĕрлемеле.

В. Д-н.

Шкул вĕренÿ çулне хатĕр

Шупашкарти 5-мĕш номĕрлĕ туллимар вăтам шкул августăн 21-мĕш тĕлне çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитнĕ. Партăсене, доскасене, сĕтел-пукансене йусаттарса сăрланă хыççăн классене вырнаçтарса лартнă. Урай хăмисене, алăксене сăрланă. Кашни класрах партипе правительствă руководителĕсен портречĕсем, чечексем, 2-шер доска пур. Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене—2 пин тетрать, перо, ручкă, кăранташ т. ыт. илсе хунă. Вĕсем вĕренÿ çулĕ пĕтиччен çитеççĕ.

Шкула çулталăк хутма 370 кубла метр вутă кирлĕ. Пайанхи куна 300 кубла метр кÿнĕ, юттине çак кунсенчех кÿрсе çитереççĕ.

Кăçал пĕрремĕш класа 40 ача илмеле. Вĕсене шута илнĕ. Шкул дирекципе учительсем нумай пулмасть вĕренекенсене шкула пухса калаçу туса иртернĕ. Пĕрремĕш класа пыракансем учительсемпе паллашрĕç.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче кĕркуннехи тĕрĕслеве 14 ачана хăварнă пулнă. Çулахи каникул вăхăтĕнче учительсем вĕсемпе тимлĕн ĕçлерĕç, расписанисем тăрăх час-часах консультацисем туса иртерчĕç. Августăн 21-мĕшĕнче 7 ача тĕрĕслевре пулса, малалли классене лайăх паллăсемпе куçрĕç. Уйрăмах ачасемпе математикăпа вĕрентнĕ Афанасьев учител лайăх ĕçленине палăртмала. Вăл пурĕ 12 хут занятти туса иртернĕ.

М. Йакăвлĕв.

Малта пыракан бригадă

— Тăрăшса ĕçлесен пур ĕç те лайăх пулать, епĕр тăрăшса ĕçлерĕмĕр те, вăйлă тырпул туса илтĕмĕр,—тет Кăмашри Сталин ячĕпе тăракан колхозри иккĕмĕш бригадă (Вăрнар р.) бригадирĕ Иван Антонăв йулташ.

Иккĕмĕш бригадă вăйлă тырпулшăн иртнĕ кĕркуннех тăрăшса ĕçлеме пуçланă. Кĕрхи тырăсене кăтартнă срукра пысăк пахалăхпа акса хăварнă. Минераллă удобренисемпе çителĕклĕ таран усă курнă.

Кĕрхи тырăсене кĕркунне акса хăварнипе лăпланса ларман вĕсем. Çуркунне сÿренĕ. Минерал çăнăхĕсемпе апат панă. Çуртрисене те кĕрхи тырăсене акнă пекех вăхăтра акса хăварнă. Вĕсем вăйлă тырпулшăн çулталăкĕпех кĕрешсе пынă.

Иккĕмĕш бригадă тырпула пуçтарса кĕрессипе те пĕрремĕш бригадăран малта пычĕ. Ырашпа кĕрхи тулăна икĕ кун малтан вырса пĕтерсе, пĕрремĕш бригадăна пулăшрĕ. Çуртрисене 6 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ.

Августăн 14-мĕш тĕлне ку бригадă çуртрисене капана хывса пĕтерчĕ. Халĕ хĕрсех клевăр выраççĕ, кĕрхи тăваççĕ.

Колхозниксем пур ĕçре те ăмăртса ĕçлеççĕ. Тырă вырнă çĕрте М. Иванова, Д. Иванова, С. Леонтйĕвă, Й. Большакова, Л. Федăрăвă колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленипе, кулленхи ĕç нормине 150-шар процент тултарса пычĕç.

Халĕ иккĕмĕш бригадă кĕрхи тулăна çапса пĕтерчĕ, ыраш кĕлтисене те 75 процентне çапнă. Тырă тухăçлăхĕ колхозниксене савăнтарать. Кашни гектартан 100 пăта йахăн ыраш, уйрăм участкăсем çинчен 125—150 пăта йахăн тухать.

Ник. Козлов.

Вырăссен реалисăмлă театрне пуçарса йаракан

(М. С. Шчепкин вилнĕренпе 75 çул тултарнă тĕле)

Августăн 23-мĕшĕнче вырăссен аслă акторĕ, пирĕн çĕршыври сценă çинчи реалисăма пуçарса йаракан М. С. Шчепкин вилнĕренпе 75 çул тулчĕ.

Шчепкин крепостнăй актор пулнă. Вăл 1788 çулти нойабĕр уйăхĕнче ĕлĕкхи Курск кĕпĕрнинчи Краснăй йатлă йалта çуралнă. Ашшĕ унăн камердинер, ямăшĕ—Волькенштейн графсен килĕнче ÿсенĕ хĕр пулнă. Шчепкин ача чухнех театр йенне вĕри хастарлăхпа турăннă. Çичĕ çулта чухне вăл граф килĕнче „Новое семейство" оперăна выльанине курнă. Çак оперă ăна килĕшнĕ. Унăн ăстăнне тарăнăн вырнаçса йулнă. Шчепкин Суджан уйесĕнчи училищăра вĕреннĕ чухне шкулти ачасем час-часах спектакльсем лартнă. Шчепкин çав спектакльсен чунĕ пулнă Çапла пĕррехинче, Сумарокăв çырнă „Вздорщица" комедийĕ шкул сцени çинче пысăк çитĕнÿлĕн иртнĕ. Шчепкин ку спектакльре Размарийăн тарçи рольне çав тери чаплăн кăларнă. Вăл выльани куракансене питĕ те килĕшнĕ Çак спектакльех тепĕр хут городничăй çуртĕнче выльаса панă. Крепостной ача выльани городничăй кăмăлне кайнă. Вăл Шепкинăн пуçĕнчен ачашласа çапла каланă: „Ай есĕ, Шчепкин! Молодец! Пуринчен те çăмăл каларăн, питĕ те лайăх выльăрăн; аван, тăванăм, питĕ аван! Уапутăн чи ырă тарçи йĕ пулăн".

Шчепкин уапутсен „ырă тарçи" пуласшăн пулмăн. Пĕтĕм чунтан, чĕрĕрен вăл театр йенне турттăннă. 1805 çулта вăл Курск хулинчи театрта ĕçлекен Барсăв тăванĕсен труппине кĕнĕ. Çакăнтан вара Шчепкин професçилĕ актор пулать, Харькăвра, Полтавăра, Ромнăра, Кременчугра, Тулăра тата ытти хуласенчи сценăсем çинче те выльать. Провинцисенчи акторсен вăл вăхăтри пурнăçĕ калама çук йăвăр та мĕскĕн пулнă. Шчепкинăн тусĕ—паллă актор П. М. Садовский çав пурнăçа акă мĕнле сăнласа çырать:

„Провинцири акторăн пурнăçĕ çав тери чухăн: çителĕксĕр, çав тери тĕрексĕр, мухтав та çук ăна—мухтав уншăн пулсан сывлăша туртăнса çухалакан тĕтĕмпе пĕрех, пурлăхĕ те çук ун (пуйан пурăнасси çинчен вăл ĕмĕтленме те хăйаймасть), вĕсем çеç мар-ха,— пĕр татăк сĕтеклĕ çăкăрĕ те çук.. мĕнпур пурлăхĕ унăн йăлана хăйпе пĕрле, мĕншĕн тесен пĕтĕм пурнăçне пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿренипе иртерекенскер, вăл хăйне халлĕн пĕр çĕрте çурт туса пурăнма май тупаймасть. Сĕтеклĕ çăкăр тупасси пĕтĕмĕшпех хăйне итлеме пухăнакансенчен килет; итлеме нумайăн пухăнчĕç пулсан— вăл тутă, сахал пулсан вара—хырăм выçă тесе ан кала".

Паллах ĕнтĕ, çавнашкал условисенче пурăнакан актор хăйĕн ăстăнне аталантарас тĕлĕшпе ĕçлесе искусствăн çÿлĕ пусăмне хăпарма пултараймăн. Талантлă акторсенчен те нумайĕшĕ пĕччеллĕхпе кульпа тата выçăпа пĕтсе пынă.

Шчепкина телейлĕх тĕл килнĕ: вăл пысăк искусствă патне хăй вальли çул хунă. Провинцири сценă çинче артис пулса çирĕм çул хушши ĕçленĕ. Кунта вăл пысăк опыт туйаннă, унăн чаплă таланчĕ çуталса аталанас ĕçре çав опыт калама çук вăйлăн пулăшнă.

1818 çулта Шчепкина Волькенштейн граф патĕнчен илес тесе подписной листпа укçа пуçтарнă. Анчах 1821 çулта çеç вăл граф патĕнчен ирĕке тухнă. Хăйĕн çывăх йулташĕсен ăна ирĕке кăларассишĕн нумай укçа тÿлеме тивнĕ.

1822 çулта император театрĕсен дирекцийĕ Шчепкина Мускаври тетр сцени çинче выльама чĕнсе илнĕ. Дебут хыççăн, 1823 çулхине вăл Мускаври артиссен труппине кĕнĕ.

Шчепкинăн чи паллă та вăрасе тăракан пурнăçĕ тата творчестви Мускавра пуçланнă. Кунта вăл хăй таланчĕн пĕтĕм пуйанлăхне усса панă, хăйĕн авторитетне чи çÿлĕ вырăна, унччен сценă çинчи ниме мĕнле дейатĕл те ĕмĕтленеймен çÿлĕ вырăна хăпартнă. Çак вырăна вăл искусствă çине çав тери таса кăмăлпа, идейăпа пăхнипе çеç çитме пултарнă. Театр уншăн пĕтĕм пурнăç пулса тăнă. Театр çине вăл—общественлă ĕç çине, йулашки вăй йулмиччен памалли ĕç çине, сценă художникĕнчен пысăк та чăн-чăн чунхавалне хăпартма ыйтакан ĕç çине пăхнă пек пăхнă. „Шчепкиншăн пурнăçа пурăнасси вăл,—тет С. Т. Аксакăв,—театрта выльассине пĕлтернĕ, театрта выльасси—пурнăçа пурăнассине".

Художествăлă тарăн сисĕмлĕх, хăй çине хăй критикла пăхни Шчепкина чăн-чăн театр искусстви задачисене ăнланса илме пулăшнă. Кивĕ театртан йулнă йăласемпе Шчепкин пăлтах сыхăланма тăнă. Сценă çине вăл усăмлă чĕрлĕх, чăн-чăн художествăлла чăнлăх, пур йĕнчен те тулса тăракан характерлă пурнăç илсе кĕнĕ.

Ун чухне Шчепкин йенĕрлĕ художник, пурнăç мĕнле—ăна çавăн пекех тарăннăн та çивĕччĕн туйса илнĕ май, çав пурнăçа содержани тарăнлăхĕпе сивчĕлĕхĕ йĕнчен драматургсенчен те вăйлăрах сăнласа паракан художник вырăс сцени çинче пулман та. 1838 çулта Белинский акă мĕн çырнă: „Городничий рольне Шчепкин йаланах çав тери аван выльанă, халĕ ĕнтĕ вăл çак рольте хуçа пулса тăрать, вăйларан та вăйлă ирĕклĕхпе выльать ăна вăл. Унăн вăййи—творчествăлă, генилĕ вăйă. Вăл авторăн помощникĕ мар, анчах та роль туса çитерес ĕçре унăн соперникĕ".

Çак çитĕнĕве Шчепкин хăйĕн çав тери пысăк та усăмлă пултарулăхне пула çеç мар, çак çитĕнĕве вăл тăрăшса ĕçленипе çеç тума пултарнă. Пирĕн сценă çинче ансамбль ĕçне пуçарса йарас тĕлĕшпе те никам та мар, чи малтан Шчепкин хăйĕн тăрăшулăхне кăтартнă. Кашни роль тĕлĕшпе Шчепкин хăй мĕнле ĕçлени çинчен Шумскийă артис патне çырнă çырăвĕ тăрăх кăтартса пама пулать:

„Тăрăшса ĕçле.. çынсен кăтартулă сăмахĕсене ан сивле, çав кăтартусене тарăнрах ăнлан, тата хăвна ху тĕрĕслеме йаланах хăйулăх пултăр сан, каланă пек, ху выльакан роль образĕ ăшнех кĕрсе кай ес, унăн общественлă йăлине лайăхрах вĕрен, унăн пĕлÿлĕхне, унăн уйрăм идейисене,—вĕсем пур пулсан,—вĕрен, çав вăхăтрах унăн ĕлĕкхи пурнăçне те ăсăнтан ан йар".

Шчепкин чăн-чăнлăх хăй кăтартса паракан персонажпа пĕтĕмĕшпе тăванлашнă. Унăн вăййи сумлăхшăн йут пулнă, унăн вăййинче çын чунĕ паларса тăнă, чĕрĕ, йумар ăсламленнĕ, ĕсĕлени илтĕннĕ. Ун маçтăрла калаçĕвĕнче сисм ăсĕпе кăмăлĕн пур йенĕсем те усăмлăн палăрса курăннă. Çавнашкал вăйă куракансене килĕшнĕ, вĕсене хăйне илнĕ.

Шчепкинăн репертуарĕ тулли те анлă пулнă. Вăл класçикла трагедисенче тата комедисенче, мелодрамăсемпе водевильсенче те тухнă. Вăл вуншар рольсенче выльанă. Анчах аслă акторăн чăн туртăмлăхĕ пуринчен ытла, Шекспир, Мольер, Грибойедăв, Гоголь йĕнче пулнă. Вăл Мольерăн „Тартюф", „Скупой", „Мизантроп" тата урăх пйессисенче те выльанă. „Гамлетра" вăл Полоний рольне, Шиллĕрăн „Коварство и любовь" трагедийĕнче Вурм рольне, Тургенĕвăн „Нахлебникĕнче" Кузовкин рольне, Островскин „Бедность не порок" пйессинче Любим Торцов рольне выльанă.

Шчепкин творчествинче „Горе от ума" тата „Ревизор" тĕп вырăн йышăнса тăнă. Вырăссен çак класçикла комедийĕсенче Шчепкинăн генилăхĕ çав тери пысăк çĕнтерÿсем тунă. Фамусов тата городничăй ролĕсенче выльаса вăл сăнласа памалли средствăн тĕрлĕ майĕсене тата вĕсен иксĕлми пуйанлăхĕсене кăтартнă, сценă çинчи реалисăма вĕçне çитиех туса çитерме пултарнă. Сценă çинчи çав образсем Белинскипе Герцăна та—çавăн пек вăйлă çынсене, искусствăна тÿрĕн те çивчĕн хак пама пĕлекенсене те—тĕлĕнтерсе хавхалантарнă. Герцен каланă тăрăх „сценă çинчи чăнлăха Шчепкин тунă, театрта вăл чи пĕрремĕш хут чăнчăнах театр çынни пулнă".

Хăйне тăван искусствăна мĕн тивĕçет, Шчепкин пурне те çирĕппĕн йышăннă. Хăй сумласа илнĕ çулăн тĕрĕслĕхне хытă ĕненнĕ. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать. Гоголь—Шчепкинăн çывăх тусĕ пулнă. Анчах Гоголь хăйĕн „Ревизорĕнчи" типсене „Развязка Ревизора" текен пйессăра йăвашлатма тăнă. Çакна хирĕç тăрса, Гоголь патне йанă çырăвĕнче Шчепкин акă мĕн калать: Çак вунă çул хушшинче городничине, Добчинскине тата Бобчинскине çывăхланса еп çав тери хăнăхса çитрĕм, вĕсене халĕ манран туртса илес пулсан— вăл ĕç калама çук киревсĕр ĕç тунине пĕлтернĕ пулĕччĕ. Мĕнпе улăштарасшăн есĕр вĕсене? Çук, вĕсем мĕнле пулнă, маншăн çавлипех хăварăр. Епĕ вĕсене йуратăтăп, пур çынсем пекех пĕтĕм начарлăхсемпе йуратăтăп. Вĕсем чиновниксем мар, пирĕн хĕрÿлĕхпе пулнă сăнсем çеç тесе мана ан калăрсам: çук, епĕ вĕсене урăхла туйма килĕшместĕп, вĕсем пурнăçри çынсем, чĕрĕ çынсем, вĕсем хушшинче еп ÿснĕ тата ватăлма та пуçланă. Куратăр и, мĕнле тахçанхи паллашу? Есĕр пĕтĕм тĕнчерен пĕр çĕре, пĕр группăна пухнă çавă çынсене; вунă çул хушшинче епĕ вĕсемпе йăлтах тăванлашнă; а халĕ есĕр вĕсене манран туртса илесшĕн. Çук, вĕсене епĕ сире памастăп, халлĕхе, хам сывă чух памастăпах".

Шчепкин хăй пурăнса ĕçленĕ тапхăрти общественлă, культурлă çынсемпе таччăн çыхăннă. Вăл малта пыракан интеллигенцин чи лайăх представителĕсене питĕ те çывăх тăнă. Унпала Пушкин, Лермонтов, Грибойедăв, Гоголь, Шевченко, Белинский, Герцен, Тургенев туслашнă. Çавнашкал илемлĕ сăмахлăхăн генийĕсем Шчепкина нумай ăс панă. Çавсемпе туслашни ăна хăйĕн пĕлÿлĕхне ÿстерме тата искусствă туйăмлăхне аслăлатма пулăшнă.

Çак аслă акторăн пурнăçĕпе ĕçĕсем вырăс театр историйĕн çута страницисем пулса тăраççĕ. Вăл страницăсенче пирĕн сценă çинчи реалисăм çуралнине кăна мар, çав реалисăм çулĕ çинче çеç театр искусстви художествăлă аслă çĕнтерÿсем тума пултарассине те усăмлăн курма пулать.

А. Матвеев.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссен районри пухăвĕ

ШĂХАСАН. Çак кунсенче парти организацин районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура парти ретне илесси, Ленин—Сталин парти членĕ йатне çӳлĕ вырăнта тытасси, парти Чăваш Обкомĕ майăн 9-мĕшĕнче суту-илӳ çинчен йышăннă постановленине мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Докладчик та, тухса калакансем те уйрăм коммуниссем партипе государствăн дисциплинисене пăсса пыни тата лайăх ĕçлекен коммуниссем çинчен каларĕç.

—Ентрийал йалсовечĕ кайа йулса пыракан йалсовет пулнă. Ăна пĕрмай йатланă. Йалсовет председателне коммунис Семенăвăна лартсан, ĕçсем йусанчĕç. Йалсовет халĕ пур ĕççене те вăхăтра туса пырать, Çавнашкалах Шуркассинчи колхозра та Филиппăв коммуниса председателе суйласа лартнăранпа ĕç аваçлăн пырать. Колхоз государствăна тырпул тăратассипе йалсоветра малти ретре пырать. Семенăвăна Филиппăв йулташсем массăпа çыхăнса ĕçлесе пыраççĕ,—тет Никифăрăв йулташ.

Шăхаљри колхоз председателĕ Павлăв йулташ (коммунис) ПСК(б)П райкомĕ хушнисене вăхăтра пурнăçласа пымасть, массăпа тачă çыхăнса ĕçлемест. Çавăнпа унăн ĕçĕсем начар, ку колхозра пайанхи куна та утă çулса пĕтермен.

Алексейĕв йулташ политвĕренӳ çителĕксĕр пыни çинчен, районри суйлав пухăвĕ комсомола йертсе пырас тĕлĕшпе йышăннă решенине парти райкомĕ пурнăçласа пымани çинчен каларĕ.

Тухса калакансем кандидатсемпе, сочувствуйушчисемпе, комсомолĕцсемпе ĕçлесе парти ретне ӳстерес, политвĕренӳ, суйлав пухăвĕсенче йышăннă решенисене пурнăçлас ыйтусем çинче питĕ çителĕксĕр чарăнса тăчĕç. Çав вăхăтрах вăл ыйтусем тĕп вырăнта пулмалаччĕ. Докладчик та вăл ыйтусем çинче çителĕклĕ чарăнса тăмарĕ.

Пуху хăйĕн решенинче партин пуçламĕш организацисен çитес пухăвĕсенче отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене пурнăçласси йепле пыни çинчен сӳтсе-йавма йышăнса хăварчĕ.

Виççĕмĕш ыйтупа райком секретарĕ Ашмарин йулташ доклад туса пачĕ.

Докладчик та, тухса калакансем те суту-илӳ ĕçĕнче пысăк çитмен лĕхсем пуррине палăртрĕç. Суту-илӳ организацисенче политикăлă массăлă ĕç çук. Вăл организацисем массăран уйрăлса кайнă. Уйкас Кипекри йалпосăр пуçне пĕри те массăна отчотсем туса памаççĕ.

Парти организацисем те вăл ĕç çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Кадрсене çĕнĕрен çитĕнтерсе пыни çук. Çавăнпа суту-илӳ ĕçĕнче тĕрĕсленмен çынсем пур. Çавăнпа çимĕççене пăсса йани,ултавлă ĕçсем тунă фактсем пур.

Районра Уйкас Кипек йалповĕн çеç 1935 çултанпа растратă çук. Пайанхи куна районра 23 пин тенкелĕх растратă шыраса илмен. Суту-илӳ организацисем растратăпа çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Судпа прокуратурă та ку ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Судра пĕр çул таран растратчиксен ĕçĕсем пăхмасăр выртаççĕ.

Таварсене складсенче нумай вăхăт вырттараççĕ. Райсойуз складĕнче 17 тĕслĕ карамел пур, магазинсенче 4—5 тĕслĕ çеç. Шăхасанри йалмагăн складра 800 булкă кăвакарса кайнă. Райсойуз складĕнче халĕ кантăк посудăсем выртаççĕ, çав вăхăтрах весене ыйтакансем темĕн чухлех. Спичкă, махоркăсем складра выртаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем йалсенче çук.

Çăкăр пĕçерсе сутассипе ĕç начар тăрать. 1937 çултанпа темĕн чухлĕ решени йышăннă пулсан та пайанхи куна Шăхасанта булкăсем, сушкăсем пĕçерсе сутмаççĕ. Шурă йе хура çăкăрсене те çителĕклĕ пĕçермеççĕ. Çăнăх магазинсенче йаланах çук, Шăхасанран Канаша кайса илме лекет.

Йалсенче лавкасене час-часах хупă тăратаççĕ. Йалпо работникĕсем вĕсене тĕрĕслемеççĕ.

Райсойуз, районри суту-илӳ пайĕ (Леонтйĕвпа Василйĕв) йалпосене йертсе пымаççĕ. Районри парторганизаци те суту-илӳ ыйтăвĕпе çителĕклĕ ĕçлемест. Çавăнпа ĕнтĕ тавар çаврăнăшĕн II-мĕш кварталти планĕ районĕпе 90 процент ытларах çеç пурнăçа кĕнĕ.

Уйкас Кипекри йалпо (председателĕ Тихăнăв йулташ) суту-илӳ ĕçĕнче аван тĕслĕхсем кăтартса пырать. Анчах унăн опычĕсене ытти йалпосене сармаççĕ.

Пуху суту-илӳ ĕçне аванлатас тĕлĕшпе татăклă решени йышăнчĕ.

С. Соколов.

Кандидата илнĕ

П. Лаптĕв йулташ 1934 çултан пуçласа ку таранччен Мăн Сĕнтĕрти (Тутаркас р.) çыхăну уйрăмĕнче ĕçлет.

Вăл чи малтанхи çулхине писмоносĕцра ĕçлерĕ. Унта активла та примерлă ĕçлесе пынăшăн, ăна посылкăсем çӳретекен уйрăма куçарнă. Лаптĕв йулташ çыхăну уйрăмĕнче тăватă çул ытла ĕçлесе, хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Ĕçлевĕ вăхăтрах вăл хăйĕн политикăлă пĕлӳлĕхне те ӳстерчĕ. Çапла лайăх ĕçлесе пынине кура, ăна пĕлтĕр сочувствуйушчисен ретне илчĕç. Халĕ нумайах пулмасть ăна парти кандидатне илнĕ.

Г. Пољаков.

ССРС историне вĕренмели кружок

ВĂРМАР. Районри парткабинет çумĕнче ССРС историне вĕренмели кружок ĕçлет. Вăл кружокра пурĕ 22 çын. Вĕсенчен парти членĕсем 8, кандидатсем 9, сочувствуйушчисем 4 шутланаççĕ. Ку кружока çӳрекенсем пурте районти учреждениссенче ĕçлеççĕ. Заљатисене йĕркелĕ, кăтартнă вăхăтра иртереççĕ. Кучерук, Саблин, Н. Белов, Савушкин тата А. Çеменăв йулташсем кăна 2 заљатине пымасăр сиктерсе хăварчĕç. Уйрăм коммуниссем мĕнле вĕреннипе парторгсем сахал интересленеççĕ.

В. С. Алендейĕв.

Пирĕн çитĕнӳсем

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă асла куна Канашри Доброљубăв йачĕпе тăракан педагогикă училищинчи комсомол организацийĕ пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет.

1937—38 вĕренӳ çулĕнче училищăра 384 ача вĕреннĕ. Вĕсенчен 125 çын комсомолта тăрать. Вĕренӳ çулĕ пуçламĕшĕнче комсомолĕцсем 53 çын çеç пулнă, комсомол комитечĕн кивĕ составĕ комсомол йышне ӳстерессишĕн тăрăшман. Уйрăмăнах директăр пулса ĕçленĕ Катрамăв нумай чăрмантарнă. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче комсомол комитечĕ комсомол йышне ӳстерессишĕн тимлĕн ĕçлерĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче комсомол йышĕ 125 çынна çитрĕ. Пурĕ вĕренӳ çулĕнче комсомола 73 çына илнĕ. Вăл шутран 39-шĕ хĕрача. Комсомол йышĕ хĕрачасен шутĕнчен ӳснĕ май, хĕрачасем хушшинче ĕçлесси те вăйланчĕ.

Пур вĕренекенсене те комсомол комитечĕ политкружоксене йавăçтарнă. Кружоксене йертсе пыракансем кирлĕ литературăна туйаннă. Парти историне вĕрентекен кружоксене парти членĕсем Терентйĕв, Ухăва тата Захарăв йулташсем йертсе пыраççĕ. Политграмăтă кружокĕсене учителсемпе вĕренекен комсомолĕцсем йертсе пыраççĕ. Кружоксене пур вĕренекенсем те хастарлăн пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Политграмăтă кружокĕсене йертсе пыракан пропагандиссем валљи уйрăм семинар организациленĕ.

ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанинче 48 комсомолĕц çывăхри йалсенче тата хулари суйлав участкисенче агитатăрсем пулса ĕçленĕ.

Пур классенче те ирхине 15 минутлă политинформаци организациленĕ, информаци тăвакансем валљи уйрăм консуљтаци пур.

Училищăн Патăрйел педучилищипе ăмăртать. Пур комсомолĕцсем те вĕренӳ çулне аваçлă вĕçлессишĕн тăрăшрĕç. Çавна пула нумай комсомолĕцсем „отлично“, „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе пĕтерчĕç. Тĕслĕхрен: Вољ кий пур предметсемпе те „отлично“, Герасимăв „отличнăпа“ „хорошо“ паллăсемпе иккĕмĕш класран виççĕмĕш класа куçрĕç. Педучилищăран вĕренсе тухнисенчен Максимăв пур предметсемпе те „отличнăпа“ „хорошо“, Борматин тата Игнатйĕва лайăх паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

Оборонă ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе комсомолĕцсемпе вĕренекенсем тăрăшса ĕçлерĕç. Пур вĕренекенсем те Осоавиахим членне кĕнĕ. Осоавиахим организацийĕ çумĕнче стрелковăй кружок, ПВХО, ГСО, авиомоделисăм кружокĕсем ĕçлеççĕ.

ГСО значокне—164 çын илнĕ. Ворошилăв пек тĕл перекенсен значокне—46, ПВХО значокне—210, ГТО—28 çын илнĕ.

Пур вĕренекенсем те хаçат-журнал çырăнса илеççĕ.

Кăçалхи 1938—39-мĕш вĕренӳ çулне лайăх пуçласа лайăх вĕренме хатĕрленетпĕр.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă чаплă уйава „отличнă“ вĕренсе кĕтсе илессишĕн кашни комсомолĕц, кашни вĕренекен кĕрешет.

П. Ванин.

Ленинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле

Шетмĕри (Турхан р.) Кирăв йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ Пăлапуç Нурăсĕнчи „Красная Чувашия“ колхоз çумĕнчи комсомол организаципе ăмăртăва тухнă.

Халљхи вăхăтра комсомол организаци хăйĕн йышне ӳстерессипе ĕçлет, колхоз çамрăкĕсем хушшинче комсомолăн 20 çулхи ĕçĕсем çинчен калаçусем туса иртерет. Çакăнпа пĕрлех çамрăксем хушшинче хутла пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе тытăннă.

В. Ибасăв.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çар ĕçне тата политикăна вĕренес ĕçри отличник — тинĕсри чикĕ хĕрринчи № отрйадăн пограничникĕ Б. М. Кондратйук йулташ вахтăра.

М. Рыжак фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

ПРИЗЫВ УМĔН

Совет çамрăкĕсен хаваслă кунĕ

Çентаберĕн 1-мĕш кунĕ çывхарса килет. Ку кун—1917—18 çулта çуралнă пĕтĕм совет çамрăкĕсен хаваслă кунĕ. Призыва кĕрсе, Хĕрлĕ Çар ретне кайни вăл—ĕççынни çамрăкĕсен хисеплĕ те чаплă тивĕçĕ пулать. Пĕтĕм совет çамрăкĕсем ку хаваслă куна тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе тăраççĕ. Пĕтĕм совет çамрăкĕсемпе пĕрле, пирĕн орденла Чăваш республикинчи çамрăксем те ку хисеплĕ куна чĕререн кĕтсе, Хĕрлĕ Çар ретне кайма хатĕрленеççĕ.

Йелчĕк районĕнчи допризывниксем кăçалхи призыва кĕтсе илме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Призыва хатĕрленнĕ май, çак кунсенче районра 1917—18 çулсенче çуралнă призывниксен ултă кунлăх лагĕрне пухса иртерне. Лагĕрте призывниксене çар ĕçне вĕрентнĕ. Нумай призывниксем çак лагĕрте кĕске кун ̈ нормăсене парса ГТО, ПВХО, ГСО, ворошилăвла тĕл перекенсен значокĕсене илчĕç.

Районĕпе пайанхи куна 1917—1918 çулсенче çуралнă призывниксенчен: ГТО нормине 171 çын, ворошилăвла тĕл перекенсен нормине 60 çын, ГСО нормине 68 çын, ПВХО нормине 159 çын парса значоксем илнĕ.

Призывниксем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтерес тата трахом чирĕнчен сыватас ĕçе те лайăх лартнă. Халĕ кăна 20 çынна хут сахал пĕлекенсен шкулĕнчен вĕрентсе кăларнă. Пайанхи куна 93 призывнике трахом чирĕнчен сыватнă. Халĕ Йелчĕк пуљницинче 7 призывник, Канаш пуљницинче 10 призывник трахомран сывалаççĕ.

Призывниксем обществăлла ĕçсенче те лайăх хутшăнса ĕçлеççĕ. Районĕпе 22 призывник стена хаçат редакторĕсем, 34 призывник политвулавçăсем пулса ĕçлеççĕ. Нумайĕшĕ политкружоксенче хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ.

Уйрăмăнах Патрекелĕнчи „Осоавиахим“ колхозри призывниксем лайăх хатĕрленеççĕ. Ку йалти призывниксем кашнийĕх ГТО, ПВХО, тата ворошилăвла тĕл перекенсен нормине парса значоксем илнĕ. 1918 çулта çуралнă призывник комсомолĕн Иван Иванов йулташ çапла калать: „Хĕрлĕ Çар ретне кайни—вăл шкула кайнийĕх пулать. Ĕнтĕ кăçал призыва хатĕрленсе, призыв умĕнхи вĕренӳрен „отличноă“ паллăпа вĕренсе тухрăм, унтан ГТО, ПВХО тата ворошилăвла тĕл перекенсен нормине парса значоксем илтĕм. Çулталăкхи вăхăтра хамăн сывлăха çирĕплетрĕм. Халĕ çар шкулĕнче вĕренме кĕме испытани тытса таврăнтăм. Ку маншăн калама çук пысăк чыс пулать“.

Çавăн пекех районри нумай призывниксем çар шкулĕсене хăйсен ирĕкĕпе вĕренме кайма тата Хĕрлĕ Çар ретне кайма ыйтса, Йелчĕк райĕçтавкомĕн Çарĕç пайне заявленисем панă.

Гер. Иванов.

Совет çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çара кайма хатĕрленеççĕ

Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ Ворошилăв йулташ 1917—1918 çулсенче çуралнă граждансене Хĕрлĕ Çара илесси çинчен кăларнă приказа Советсен çĕршывĕнчи çамрăксем калама çук пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Августăн 21-мĕшĕнче Мускавра, Хĕрлĕ Çарăн Тĕп Çуртĕнче столицăри Дзержинский тата Коминтерн районĕсенчи призывниксен пухăвĕ пулса иртнĕ. Унта пин çын ытла пулнă.

Пухура тухса каласнă призывник Туруйĕв йулташ çапла каланă:

—Епĕр пирĕн аттесем Ленин—Сталин партин йалавĕпе, алла хĕçпăшал тытса, çĕнĕ, телейлĕ пурнăç кĕрешсе илнĕ çулсенче çуралнă. Епĕр çакăн пек тупа туса калатпăр: çав йалавпах епĕр Октаберь кĕрешсе илнисене кирек мĕнле тăшманран та сыхласа тăрăпăр.

Çав кунах, кăнтăрлахи апат перерывĕ вăхăтĕнче, столицăри савăтсемпе хапрăксенче приказа коллективлăн вуланă. Октаберьпе пĕрле çуралнă телейлĕ совет патриочĕсем: епĕр Хĕрлĕ Çара савăнсах кайатпăр, хамăран чеçкеленсе тăракан социализмлă тăван çĕршыва сисĕмлĕн сыхлăпăр,—тенĕ.

Столицăри çамрăксем призыв кунне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ. Становсем тăвакан „Красный Пролетарий“ савăтри 234 призывникрен 12 çын—темиçе хут та ĕнтĕ хăйсем тĕллĕн вĕçнĕ учљотсем. Çамрăксенчен 60 çын ытла ГТО значокĕ илмели нормăсене парса татнă. Савăтри призывниксенчен 90 проценчĕ ворошилăвла тĕл перекенсем.

Мускав облаçĕ Хĕрлĕ Çара лайăх çамрăксем парать. Кăçалхи призывниксен составĕнчен: 26,6 проценчĕ—ворошилăвла тĕл перекенсен, 13,3 проценчĕ—ГТО значокĕ, 20 проценчĕ—ПВХО значокĕ, 17,9 проценчĕ ГСО значокĕ илнĕ.

Ленин хулинчи призывниксенчен çуррине йахăнах ворошилăвла тĕл перекенсем. Августăн 31-мĕшĕнче Ленинградра тĕл перекен призывниксен пĕтĕм хулари массăлă ăмăртăвĕсем пулса иртеççĕ.

(ТАСС)

Хут пĕлменни пĕр çын та çук

Атăл тăрăхĕнчи Нимĕççен республикĕ Хĕрлĕ Çара сывлăхлă тата хут пĕлекен çамрăксем парать.

Призывниксенчен 80 проценчĕн ПВХО тата ГСО значокĕсем пур. Кашни пилĕк çынран пĕри ГТО значокне илме нормăсем панă тата ворошилăвла тĕл персе тивретеççĕ. Августăн 18-мĕшĕнче авиаци праçникĕнче республикăри кăçал çара кайакан çамрăксем самољотпа ăсталла вĕçме пултарнине кăтартнă. Призывниксем хушшинче хут пĕлменни пĕр çын та çук.

(ТАСС)

Испанири фронтсенче

Халĕ Испанири фронтсенче пулса тăнă лару-тăру вăрçă йенчен кăна мар, тата политикă йенчен те пысăк интерес кăларса тăрать. Йут çĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Испанири фронтсенче „вăйсен пĕрталлăхĕ“ пулса тăнă. Кирек хăш фронта илсе пăхсан та, халĕ пур çĕрте те йенсен вăйĕсем пĕр пеки, йенсенчен никăшĕ те тепĕр йенне татăклăнах çапса, çĕнтерӳ тума пултараймани паларса тăрать.

Çак „вăйсен пĕрталлăхĕ“ пайанхи политикă тата вăрçă тĕлĕшĕнчен республиканĕцсен пысăк ӳсĕмĕ пулса тăрать. Вĕсем пуçарулăхĕпе кăна ĕлĕк пулнă пĕр активлă фронт (Левант фрончĕ) вырăнне халĕ тăватă активлă фронт пулса тăнă: Левант, Хĕвелтухăçĕнчи, Центрти тата Естремадурă фрончĕсем. Тăватă активлă фронт пулса тăни фашиссемшĕн питех те усăллă мар пулса тăрать, çав вăхăтрах республиканĕцсемшĕн питех те усăллă пулса тăрать. Апрелĕн 15-мĕшĕнче фашиссем тинĕс патне çурса тухса, республикă территорине иккĕ пайа пайласа хуни фашиссемшĕн стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк ӳсĕм пулса тăнă, — вĕсен республиканĕцсене темиçе пайа пайласа тапăнма тата ăна тума хăйсен тĕп вăйĕсене кирлĕ çĕрте вырнаçтарса тăма май пулнă.

Фашиссем Сагунто-Валенçи çинелле тапăнса пыма шутлаеа, хăйсен пĕтĕм вăйне Левант фрончĕ çине йачĕç. Ытти фронтсенче фашиссем оборонăна куçрĕç. Франко генерал йȳлĕн 18-мĕш тĕлне (Испанири вăрçă иккĕ çул тултарнă тĕле) Сагунто тата Валенçи хулисем фашиссен аллинче пулаççĕ, тесе мухтанчĕ.

Анчах çак плана пурнăçа кĕртме чи малтан Левант фронтĕнчи боецсемпе командирсем чăрмантарнă. Фашиссен вăйсем, уйрăмăнах техникăлă средствăсем, нумайрах пулнă пулин те, Левант фронтĕнчи боецсем вăйлăн хирĕç тăнине тата çак фронтри командовани пултарулă тактикă тытса пынине пула, фашиссем лартнă задача пурнăçа кĕртеймерĕç—Сагунто тата Валенçи хулисене йарса илеймерĕç. Фашиссен çарĕсем Левант фронтĕнче пысăках мар территори йарса илчĕç, анчах уншăн питех те нумай сухатусем турĕç. Çапăçу çав тери вăйлă пулнă, кунта сухатнисенчен уйрăмăнах вилнисем нумай пулнă (йут çĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, Левант фронтĕнче вилнисен шучĕ 20 пин çын пулнă).

Фашиссен командованийĕ йȳлĕн пĕрремĕш кунĕсене çитиех çине тăрса республиканĕцсен позицийĕсем çине тапăнса пычĕ, йулашкинчен вара хăй тăрăшни ахалех пулнине кура, йулашки майпа усă курма пăхрĕ. Ытти фронтсене пурне те пушă тăратса хăварса, фашиссем йȳлĕн пуçламĕш тĕлне Теруелĕн кăнтăр хĕвеланăç йенче нумай вăйсем тата средствăсем пухса çитерчĕç. Кунта фашиссем хăйсен чи лайăх чаçĕсене, çав шутрах Наварро тата Итали корпусĕсем те, илсе пынă пулнă.

Йȳлĕн 20-мĕш числисенче Барракос тата Саррио çине наступлени пуçарса йарса, çĕр нумайрах пулнă пирки, фашиссем республиканĕцсен фронтне татса кĕме тата йȳлĕн 27-мĕш тĕлне Барраков-са тата Сарриона тытса илме пултарчĕç. Çак наступленире фашиссем 20 пин çынна йахăн сухатрĕç, вĕсенчен 10 пин çын вилнисем.

Республиканĕцсен положенийĕ калама çук йăвăр пулнă. Фашиссем малала куçса пыни Сагунто умне хăрушлăх кăларса тăратнă.

Çак йăвăр вăхăтра республиканĕцсем темиçе кун хушшинче хĕвелтухăç фронтри Ебро участăкĕнче хăйсем наступлени тăвассине хатĕрлесе çитерчĕç. Йȳлĕн 24-мĕшĕнчен 25-мĕшне çĕрле республиканĕцсем Ебро йуханшывĕ урлă каçса, хăвăрттăн малалла кайрĕç.

Республиканĕцсен çак наступленийĕ фашиссен тĕп вăйсăрлăхне уçса палăртрĕ—вĕсен çынсем çителĕклĕ мар. Фашиссен хĕвелтухăç фронтра республиканĕцсен наступленине хирĕç тăма резервăсем пачах та пулман. Республиканĕцсем хăйсен наступленине çакăн пек участкăра суйласа илнĕ: вĕсем малала пырса, фашиссен Левант фронтĕнчи çарĕсен тылне хăрушлăх умне кăларса тăратма пултарнă. Кунтан ĕнтĕ фашиссен Левант фронтĕнчен хăйсен çарĕсене васкасах илсе кайса, вĕсене Ебро патне йани йăлăнмалла та. Фашиссем Левант фронтĕнчен хăйсен чи лайăх чаçĕсене илсе йанă. Йȳлĕн 26—30-мĕшсем хушшинче фашиссем Ебро участăкне 8 çуран çар дивизийĕсем, 150 орудие тата 150 самољот йанă.

Пысăк вăйсем курса кăна фашиссем йȳлĕн 30-мĕшĕнче республиканĕцсем Ебро участăкĕнчи Файон, Гандеса таврашĕнче наступлени туса пырассине чарса лартма пултарчĕç. Кун хыççăн Испанири фронтсенче çакăн пек лару-тăру пулса тăчĕ:

Левант фрончĕ. Йȳлĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа фашиссен Ебро участăкне йама урăх çĕртен хăйсен чи лайăх чаçĕсене ирĕксĕрех илмеле пулчĕ. Фашиссен пĕтĕм авиацийĕ республиканĕцсем Ебро йуханшывĕ урлă каçнипе кĕрешме куçрĕ. Фашиссен çарĕсем наступлени туса пырасси хăвăртах сухалчĕ, фашисла командовани хăйĕн çак фронтри чаçĕсене наступленине йама пăхни аваççăр пулса пычĕ.

Çакăн хыççăн фашиссем наступлени тăвассине чарса лартрĕç. Оборонăна куçса, вĕсем фортификацилĕ ĕççене тума тытăнчĕç. Республиканĕцсем хăшпĕр участăксенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе активлă ĕçсем туса пычĕç, вĕсем чылай ӳсĕмсем тума пултарчĕç. Вара республиканĕцсем фортификацилĕ ĕçсем тума тытăнчĕç.

Йут çĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, фортификацилĕ ĕççенче вырăнти пурăнакансем хăйсен ирĕкĕпе питех те нумайăн ĕçлеççĕ. Çапла ĕнтĕ, республиканĕцсем ку фронтра пулса тăнă лару-тăрупа, малашне фашиссем наступлени тăвас-мĕн пулсан татах та вăйлăраххăн хирĕç тăмали майсем тăвас тĕлĕшре усă курчĕç.

Центрти фронт. Республиканĕцсем çак фронтра августăн 1-мĕшĕнче Гриегос, Аљбарасин патнелле тума пуçланă наступлени, сăртлă вырăнсем пулнă пирки нумай йăвăрлăхсем пур пулин те, хăвăртах малала пырать. Халĕ кĕрешӳ Гриегос çывăхĕнче пырать. Кунта республиканĕцсем 17—20 километр малала кайрĕç. Фашиссен ирĕксĕрех çак участăка хăйсен авиацин пĕр пайне тата тĕп командованин резервинчи хăшпĕр чаçĕсене илсе йамала пулчĕ. Ку участăкра пуçарулăх республиканĕцсен аллинче тăрать.

Фашиссен кунта ирĕксĕрех резервăран татах та хăшпĕр чаçсене илсе йамала пулать, мĕншĕн тесен республиканĕцсем малала куçса пыни Аљбарасиншăн хăрушлăх кăларса тăратать. Ку ĕнтĕ фашиссемшĕн питех те килĕшӳсĕр, мĕншĕн тесен, вĕсен Теруелĕ çурçĕрне çыхăнтарса тăракан тĕп çулĕсем Аљбарасинран питех те çывăхра тăраççĕ.

Естремадурă фрончĕ. Фашиссем ку фронтра пĕрре кăна мар Аљмаден патнелле наступлени тума пăхрĕç, вĕсем хăйсен умне ртуть кăлармалли пуйан рудниксене йарса илес задача лартрĕç. Августăн пуçламĕшĕнче пысăк вăйсем пухса, фашиссем кунта çав задачăпах çĕнĕрен наступленине куçрĕç. Малтан фашиссен вăйĕсем нумай вăйпа тапăнса пынине пула, республиканĕцсен тыла чакмала пулчĕ.

Тыла куçса вырнаçсан, республиканĕцсем фашиссен наступленине чарса лартма пултарчĕç. Фашиссем ку участкăра халĕ пур вăйсемпе малала наступлени туса пыма пултараймĕç.

Хĕвелтухăç фрончĕ. Балагер участăкĕнче августăн 9-мĕшĕнче республиканĕцсем Сегре йухашывĕ урлă каçса пĕр километр малала куçрĕç. Фашиссем Сегре йуханшывĕ çине шљузăсем йарса, шыва çĕклерĕç те республиканĕцсен иксе каçмалли хатĕрсене кăштах аркатма пултарчĕç. Ку вăл республиканĕцсен çарĕсене тата çапăçу хатĕрĕсене шыв урлă каçаррассине чарса лартрĕ. Халĕ кĕрешӳ Сегре йуханшывĕн хĕвеланăç çыранĕнче пырать. Фашиссем пур майсемпе те республиканĕцсене хĕвелтухăç йенчи çыранĕ, вĕсен малтанхи позицийĕсем çине хăваласа йама пăхни аваççăр пулса пырать.

Çак участкăра та пуçарулăх республиканĕцсен аллинче тăрать.

Ебро участăкĕ. Гандеса патнелле фашиссем хăйсен Наварри чи лайăх дивизийĕсене илчĕç. Çак дивизисем республиканĕцсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе пăрахас тата Гандеса районĕнче чылай çӳлĕ вырăнсене йарса илес тĕлĕшпе тунă ĕçсем ахалех пулса пычĕç, республиканĕцсем вăйлăн хирĕç тăрса, фашиссене çак вырăнта республиканĕцсен варринче тăракан гарнизоне çăлса кăларма май памарĕç. Гандеса таврашĕнчи чылай çӳлĕ вырăнсем аллăран-алла куçса тăрĕç. Çак çӳлĕ вырăнсемшĕн кĕрешесси çакăн пек пулса пырать: фашиссем çуран çарăн, артиллерин тата авиацин пысăк вăйĕсене пухаççĕ те вăл çӳлĕ вырăнсене сыхлакансем çине пырса тăрăнаççĕ.

Çине тăрса кĕрешнĕ хыççăн нумай сухатусем тунипе фашиссем хăшпĕр çӳлĕ вырăнсене йарса илме пултарчĕç, республиканĕцсем пысăках мар гарнизонĕсем, фашиссене пысăк сухатусем тутарса, çав çӳлĕ вырăнсене фашиссенчен тасатрĕç. Фашиссем вăл çӳлĕ вырăнсем çинче çирĕпленсе çитичченех республиканĕцсем хăйсен резервисемпе питĕ те пултарулăн контратакă туса, фашиссене шăлса йаваççĕ, сухатнă çӳлĕ вырăнсене каллех йарса илеççĕ.

Çапла çичĕ кун хушши ĕнтĕ çак участкăра кĕрешӳ пырать. Çак вăхăт хушшинче республиканĕцсем хăйсем йȳлĕн 30-мĕшĕнчи йарса

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Китайри вăрçă ĕçĕсем
ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 8-мĕш револуцилĕ халăх çарĕн бойецĕсем çапăçура. (Сойузфото).

Китайри вăрçă

Центртри Китайра Йанцзы йухан-шывĕн кăнтăр йенчи çыранĕ çинче Йапони çарĕсем Сиңцзы хулине туртса илнĕ. Çав районра чи вăйлă çапăçусем Ңутсушаң патне (Сиңцзыран кăнтăр-хĕвеланăç йенчеле) куçнă. Пойанху кўллин хĕвеланăç йенчи çыранĕ çине Китайăн çĕнĕ çарĕсем çитнĕ, вĕсен задачи—Цзўцзйан—Наңчан чукунçулĕ тăрăх наступлени тăвакан Йапони çарĕпе çапăçасси. Çĕнĕ вăйсем пырса çитнипе Китай чаçĕсем Сиңцзыран кăнтăр йенннеле куçса пыракан йапонĕцсене чарса лартнă.

Йапонĕцсем Жуйчан çине наступлени туса пынине Китай çарĕсем вăйлăн çапăçса чарса тăраççĕ. Ку фронтăн пĕтĕм линийĕ тăрăх хайар çапăçусем пулса пыраççĕ.

Датуна (Йанцзы йуханшывĕ çинче, Аңцинран айалтарахра) тата Пойанху кўллин хĕвеланăç йенчи çыранĕ çине, катĕрсем тата пысăк мар çар карапĕсем çине ларса, Йапони çарĕсен çĕнĕ чаçĕсем пырса çитнĕ.

Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕ çинче Йапони çарĕсен тĕп вăйĕсем Хуанмей тата Сусун хулисенчен тухса Тайху йенннеле кайма пуçланă. Йапонин çак чаçĕсем çине катайĕцсем пытанса ларнă çĕртен тухса тапăннă. Йапонĕцсене пысăк тăкаксем кўнĕ.

Йапонин Йанцзы йуханшывĕ çинчи çар карапĕсем, Китай авиацийĕ бомбăсем пăрахасран хўтлесе, Франци флагĕсемпе усă кураççĕ. Августăн 21-мĕшĕнче Китайăн çыран çинчи артиллерийĕ Йапонин 6 транспăртне шыва путарнă, вĕсенчен пĕрин çине йапонĕцсем пĕтĕмпех вăрçă хатĕрĕсем тийенĕ пулнă.

Августăн 22-мĕшĕнче Йапони самоҙочĕсем Чжучжо çине (Чаншаран кăнтăр йеннерехре) 100 бомбă ытла пăрахнă. Пысăк пушар тухнă. Нумай çурт çунса кайнă.

Çурçĕр Китайра, Хенаң провинцин çурçĕр пайĕнче Йапони çарĕсем кăнтăр йенннеле, Мынçаңпа Веңçаң патнеле (Чженчжоуран хĕвеланăç йенче) куçса пыраççĕ. Ку районра хайар çапăçусем пыраççĕ. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсем пит нумай самоҙотсем тата танксем пулăшнипе августăн 23-мĕшĕнче республиканĕцсен позицийĕсем çине атака тунă. Йăвăр тăкаксем туса, фашиссем Гаета высоти районĕнче хăйсен линийĕсене кăшт малала куçарнă.

Августăн 23-мĕшĕнче республикă истребителĕсем, Италипе Германи самоҙочĕсене хирĕç сывлăшра çапăçса, пысăк çĕнтерўсем тунă. Вĕсем хăйсенне 1 самоҙот çеç çухатса, фашиссен 21 самоҙотне персе антарнă.

Вăтаçĕрти фронтăн Естремадурă участкинче пăлхавçăсене Елъ Кампиҙйо йалне йышăнма май килнĕ. Санкто Спиритус районĕнче республиканĕцсем Зухар йуханшывĕ урлă каçнă, хирĕç тăракан тăшмана пысăк тăкак кўрсе çĕмĕрсе, малала куçнă. Пăлхавçăсен пĕр çар чаçĕ, хăй сыхлакан позицийе республиканĕцсене парса, пĕтĕм составĕпе республиканĕцсем йенне куçнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Гитлĕра хирĕçле демонстрацисем

Данцигри гитлĕрăвĕцсем Данцигра поҙаксене час-часах хĕненине кура тата вĕсем Поҙшăна хирĕçле ытти тĕрлĕ выступленисем тунине кура, Торнра (Поҙшăн Поморски войеводстви) августăн 21-мĕшĕнче вунă пин çынлă демонстраци пулса иртнĕ, демонстрантсем гитлĕрăвĕцсем пусмăрланине хирĕç, Данцигра поҙаксене нимĕнле правасăр усранине хирĕç протест тунă.

Августăн 20-мĕшĕнче Гдыңăра, Данцигри фашиссен киревсĕр ĕçĕсене хирĕç протест туса, Гитлĕра хирĕç вăйлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстраци пуçламали сăлтав — гитлĕрăвĕцсен бандитла ĕçĕ пулнă, вĕсем хыта пыракан пуйăс çинчен Поҙшăн чукунçул çинче ĕçлекен служăщчине кăларса ывăтнă, çакна пула çав служăщчин икĕ урине тата пĕр аллине татса кайнă. (ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Генлейнăвĕцсем—Гитлер агĕнчĕсем—Чехословаки правителстви туса хатĕрленĕ саккун пройекчĕсене малашнехи калаçусен никĕсне хума килĕшмен хыççăн, правителствăри çынсем аптăраса ўкнĕ. Калаçусене организацилес ĕçсенчи пуçарулăх халь йалтах Англи „советникĕ“ лорд Ренсимен йенне куçнă.

Августăн 23-мĕшĕнче Ренсимена Чехословаки призиденчĕ Бенеш йышăннă, унпа нумай вăхăт калаçнă. Çĕçе пĕлекен çĕртен пĕлтернĕ тăрăх, „мирлĕ пурнăçа сыхлас ĕç интересĕсемшĕн“ Бенеш генлейнăвĕцсене татах уступкăсем пама килĕшет, анчах Генлейнăн çак 3 требăвăнине: Судет облăçне територилĕ автономи пама (никама пăхăнмала мар тума), унта нимĕç парламенчĕ тума тата чех нацилĕ çынсене Судет облăçĕнчи администрацилĕ вырăнсенчен те кăларма ыйтнипе вăл та, правителствă та килĕшмест, тесе паллă тăваççĕ пĕлтерўсенче.

Генлейнăвĕцсемпе çĕнĕ калаçусем пуçлама правителствă вĕсене мĕнле уступкăсем парасси паллă мар-ха. Йăвăрлăх кунта правителствăна икĕ йенчен хĕссе тăнинче: Англи „советникĕ“ Германи фашисăмĕ умĕнче кайала чактарассишĕн çине тăрать, халăх массисем уступкăсен политикине пĕтерме тата Генлейн кăмăлне кайман „национаҙнăçсен кодексне“ çирĕплетме ыйтаççĕ.

(ТАСС).

Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш конгресĕ хупăнна

Августăн 23-мĕшĕнче Ңйу-Йоркра (Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсем) çамрăксен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ, 8 кун хушши ĕçленĕ хыççăн, хăй ĕçĕсене туса пĕтернĕ. Конгресра 55 çĕршыври организациленнĕ 40 мĕлйун çамрăксен 500 делегачĕ пулнă.

Конгрес пĕтĕм нацисен çамрăкĕсем тăванлă туслă пулса кĕрешесси çинчен решени йышăннă. Делегацисен руководителĕсем алă пуснă обйазателствăн пĕр пунктĕнче çапла каланă: „Пирĕн çĕршывсенчи çамрăксем нимĕнле вăрçăлă агреççине те ан хутшăнччăр тесе хамăр мĕн тума пултарнине йăлтах тума сăмах паратпăр“.

Конгрес хăйĕн малашнехи задачисене палăртса хуракан резоҙуци йышăннă. Резоҙуци çакна паллă туса хăварать: пĕрремĕшпе иккĕмĕш конгрессем хушшинчи тапхăрта çамрăксене пĕрлештерес ĕçре чылай çитĕнўсем тунă. Конгрес хăй умне: колонилĕ çĕршывсенчи çамрăксене хăй патне сывхартас задачă, çавăн пекех тата Вăтаçĕр Америкăпа Кăнтăр Америкăри çамрăксемпе ытти çĕршывсенчи çамрăксен организацисем хушшинче тата тачăрах çыхăну туса хурас задачă лартать.

(ТАСС).

Ырашпа житңак гибричĕ

САРАТĂВ, августăн 24-мĕш. (ТАСС). Саратăври çелекци станцинчи çамрăк учонăй, йалхуçалăх ăслăлăхĕсен кандидачĕ орденоносĕц Краснўк йулташ ырашпа житңак гибричĕсемпе интереслă опытсем туса иртерет. Вăл пуçласа кĕрхи ыраща житңакпа пĕтĕçтерме пултарнă.

Житңак вăл нумай çул ўсекен ўсен-тăран. Вăл чи сивĕ хĕлсене чăтăмлă иртерет тата чи уйар çанталăка та çăмăл тўсет. Житңакăн çак йенĕсемпе ўсен-тăрансен чи куҙтурлă формисене тăвас ĕçре усă кураççĕ.

Краснўк йулташ хăйĕн малали ĕçне икĕ тĕрлĕ гибрид çинче иртерет—пĕр çулхи тырăпа (ыраш йевĕрлĕ) тата нумай çул ўсекен тырăпа. Нумай çул ўсекен гибрид лайăх ўсет тата çимели симĕс массă та нумай парать.

Шупашкарти ĕççынннисен перекетлĕхĕ ўсет

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен материаллă пурнăç условийĕсем татти-сыпписĕр лайăхланса пыраççĕ. Çак вăл ĕççыннисем хăйсен перекетленĕ укçи-тенкисене перекет кассине курасси ўсниччен те лайăх курăнать. Акă, Шупашкарти тĕп перекет кассине хунă укçа 1936 çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне 1.219.269 тенкĕ, 1937 çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне 1.813.369 тенкĕ пулнă пулсан, кăçалхи йанварĕн 1-мĕшне вăл 2.593.106 тенке çитнĕ. 1938 çулти августăн 1-мĕшне перекет кассине хунă укçа 3.521.642 тенкĕ шутланать.

Е. Филиппăв.

Химилĕ тревогă колхозра

ЙЕЛЧĔК. Патрекелĕнчи „Осоавиахим“ колхозра Осоавиахим ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Колхозниксем пурте тенĕ пекех Осоавиахим членĕнче тăраççĕ. Вĕсем хăйсен колхозне никам пырса тĕкĕнеймн оборонă крепăçĕ туса хума тăрăшаççĕ. Вăл тĕлĕшпе колхозниксем пашалран ворошиловла тĕл персе тивретме, сывлăшран тата химилĕ тапăнусенчен хўтленме вĕренеççĕ.

Август уйăхĕн пуçламĕшĕнче, кăçал, Йапони войенщинин ирсĕр провокацийĕсене хирĕç ответлесе, „Осоавиахим“ колхоз членĕсем ПВХО кружокĕ организацилерĕç. Кружока 55 çын çыранчĕç, вĕсем хушшинче колхозницăсем те нумай. Членсем ыйтнипе кружок занңатийĕсем кашни каçах пулса иртрĕç. Заңатисенче противогаз пайĕсене, сывлăшран пăрахнă бомбăсенчен мĕнле хўтленмелине, мĕнле сийенлĕ газсем пулнине, вĕсенчен сыхланмалине т. ыт. вĕренчĕç.

Хăйсем мĕн вĕреннине практикăра тĕрĕслесе пăхас тесе, Осоавиахим членĕсем августăн 18-мĕшĕнче, авиаци кунĕнче, колхозра химилĕ тревогă туса иртерчĕç.

Химилĕ тревогăна химотрйад членĕсем 55 çын хутшăнчĕç, отрйадра 8 командă пулчĕ.

...Акă газ йарасси çинчен пĕлтерекен çигнал. Колхозниксем пурте чўречесене хупласа питĕрнĕ, выҙăхсене, чăх-чĕпсене, хуркăвакалсене газран хăтăлмали витене хупнă. Йал хушшинче противогаз тăхăннă çынсем çеç çўреççĕ.

Тревогă пĕтĕмпе 7 сехете тăсăлчĕ. „Осоавиахим“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсем — осоавиахимĕцсем вăрçă-мĕн пулас пулсан хăйсем тăшманран сыхланма пултарнине кăтартса пачĕç.

Тревогă хыççăн химотрйад членĕсен пухăвĕ пулчĕ, унта тревогă вăхăтĕнче палăртнă хăшпĕр çитменлĕхсене критиклерĕç. Вĕсем çитес тревогăсене татах та организацилĕрех иртерме, халь палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме, ПВХО тата ГСО кружокĕсене малала та йĕркелĕ ĕçлеттерме пулчĕç.

Химилĕ тревогăна 60 çулхи старриксем — Аверкий Клементйĕвпа Николай Дозорăв колхозниксем те хутшăнчĕç.

Мих. Воронцов.

Шҙупкăлă поход

Комсомол 20 çул тултарнă йатпа ПССЛКС Шупашкар хула комитечĕпе Чăваш Освочĕ Шупашкар—Хусан маршрутпа комсомолĕцсемпе пионерсен шҙупкăлă походне организациленĕ.

Августăн 18-мĕшĕнче 10,5 сехетре 3 шҙупкăпа 14 çын Атăл тăрăх тухса кайнă. Çул çинче Сĕнтĕрвăрринче Освод членĕсемпе пĕр-пĕрин ĕç опычĕсем çинчен калаçу туса иртернĕ. Куславкка комбинатĕнче екскурçинче пулнă, ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕпе Фирсăвă йулташпа комбинат ĕçĕсем çинчен калаçнă.

Августăн 20-мĕшĕнче 13 сехетре Хусана çитнĕ. Вĕсене Тутар Освочĕн работникĕсем моторкăсемпе хирĕç тухса илнĕ. Вĕсем пĕр-пĕрннпе йулташла тĕл пулса пĕр-пĕрин ĕç опычĕсем çинчен калаçу туса иртернĕ.

Поход членĕсем Хусан хулине курса çўренĕ, музейра пулнă, кино курнă. Кабан кўллинчи шыв станцин дружинникĕсемпе воҙейболла выҙанă. Моторкăсемпе Маркиса кайнă, Казанкă йуханшывĕ тăрăх куҙтурă паркне кайса курнă.

Походра пулнисем Хусантан августăн 23-мĕшĕнче пăрахут çине ларса августăн 24-мĕшĕнче Шупашкара çитнĕ.

Кĕскен

520 зайавлени. Йетĕрнери педучилищăна 1938—39 çулхи вĕренў çулĕнче мĕн пурĕ 175 çын вĕренме илмеле.

Вĕренме кĕме 520 зайавлени панă. Вăл шутран 70 зайавлени—отличниксен. Вĕсене шкула испытанисĕрех илнĕ.

В. Свешникăв.

Плана ытлашшипех тултарнă. Хирлепри (Вăрнар районĕ) „Строитĕл“ промколхозĕн кăçал плана 450 пин кирпĕч тумалла пулнă. Вăл ку плана ытлашшипех тултарса государствăна 100 пин кирпĕч сутрĕ. Çакăншăн промколхоза Чăвашпромсоюз 3000 тенкĕлĕх тĕрлĕрен промтаварсем пачĕ. Н. К.

Паллă купăсçă. Елеçри (Йĕпреç районĕ) Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕ Çтепан Тихăнăв икĕ ретлĕ купăспа питĕ лайăх выҙять. Вăл мĕн пурĕ 179 кĕвĕ-йурă выҙама пĕлет. Тихăнăв халь 49 çулта. Апла пулин те вăл çамрăксемпе хутшăнса активлă ĕçлет. Колхоз çумĕнчи музыкă кружокне йертсе пырать.

Ç. Федотăв.

Испанири фронтсенче

(Й У Л А Ш К И)

илнĕ пĕтĕм территорине сыхласа хăварчĕç.

Вăл кĕрешўсенче Листер дивизийĕ уйрăмах паттăрлăх кăтартнипе палăрчĕ. Фашиссен Наваррори чи лайăх дивизийĕсем çак дивизи çине стена çине çапăнна пек пырса çапăнса, ăна хăйсен вăйлă техникипе усă курса та çĕмĕрсе кĕме пултараймаççĕ.

Авиаци ĕçĕсем. Республикă авиацийĕ хăйĕн тĕп ĕçĕсене Ебро тата Балагер участăкĕсене куçарчĕ. Унăн ĕçĕсем малтанхи пекех пысăк паттăрлăхпа палăрса тăраççĕ. Августăн 1-мĕшĕнчен 10-мĕшне çити сывлăшри çапăçусенче фашиссем 16 самоҙот çухатрĕç, республиканĕцсем—5. Августăн 14-мĕшĕнче Ебро участăкĕнче республиканĕцсен авиацин пысăк ушкăнĕпе фашиссен авиацин татах та пысăкрах ушкăнĕ хирĕç пулчĕç. Сывлăшри çапăçу пуçланса кайрĕ. Çак çапăçура республиканĕцсем 18 самоҙот (13 Фиат, 2 Мессершмидт, 3 бомбардировщик) персе антарчĕç. Республиканĕцсен пур самоҙочĕсем те хăйсен аеродромĕсем çине лайăххăнах таврăнчĕç.

Çак çапăçу республикă ҙотчикĕсем малала ўсse пынине кăтартса пачĕ, мĕншĕн тесен, малтан пулса иртнĕ çавăн пек çапăçусенче республиканĕцсем нумай мар пулин те, çапах та çухатусем тукланă. Ку çапăçура республиканĕцсем пачах та çухатусем туман.

Йулашки событисем тăрăх хаклас пулсан, Испанири фронтсенчи хире-хирĕç йенсен малашлăхĕсем мĕнле-ха?

Республиканĕцсем хăйсен кĕрешĕвĕнче: „Ирăн çĕнтерес тесе, пайан хирĕç тăмала“ текен лозунга питĕ пахан пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Республиканĕцсем хăйсем хирĕç тăрассинче оборонăлă çапăçун метăчĕсемпе кăна мар усă кураççĕ, тата вĕсем наступленисем те тăваççĕ. Паллах, пайанхи республиканĕцсем тактикăлă ўсĕмĕсене стратегилĕ ўсĕмсем туса хума май паракан татăклă наступленисемех тума пултараймаççĕ-ха. Республиканĕцсем вăл задача халлĕхе хăйсен çарĕ умне лартмаççĕ те.

Республиканĕцсем хăйсен йулашки çапăçăвĕсемпе фашисла çарсен вăйсăрлăхне те çителĕклех кăтартса пачĕç. Германи тата Итали фашисĕсем техникăпа тата çынсемпе пысăккăн пулăшаççĕ пулин те, фашисла çарсем мĕнле те пулсан ўсĕм тăвасси çинчен шутлама пултараймаççĕ. Пачах урăхла, халĕ вĕсен ирĕксĕрех темиçе фронтра кĕрешме лекет, нихăш фронтра та вĕсен наступлени тума çителĕклĕ вăйĕсем çук-ха.

Паллах, Испанирен интервентсен çарĕсене кайала илсе тухса кайасси çинчен сўпĕлтетеççĕ пулин те, Италири тата Германири фашиссем халĕ те хăйсен пуканине — Франко генерала пулăшма вĕçĕ-хĕррисĕр çынсем тата техникă йарса тăраççĕ. Анчах çак çынсемпе çак техникă пĕтĕмпех фашисла çарсем пысăк çухатусем тунине витме кăна кайать-ха.

Республикă халăхĕн хăйĕн тискер тăшманне—фашисăма хирĕç кĕрешес кăмăлĕ сўнмест, нумай йăвăрлăхсем пур пулин те, республиканĕцсен çапăçури малашлăхĕ чылайăн лайăхланчĕ.

Г. Свиридăв.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Москва“ йатлă гостиницă (Мускав хули).
Н. Кубейĕв фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Радиовыстăвкăра

Августăн 23-мĕшĕнче Шупашкарта, строителсен клубĕнче, Чăваш республикĕнчи 2-мĕш радиовыстăвкă уçăлнă. Выстăвкăра мĕн пурĕ 45 експонат пулмала. Халĕ 38 експонат пур, ыттисем пайан çитмеле. Выставкăри експонатсенчен паллăраххисем çаксем пулаççĕ: Куславкка районĕнчи Карачри туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă Виноградăв тунă детектăрлă прийомник. Ку прийомник саватра тунинчен пĕртте кайа мар тата вăл вырăнтан вырăна куçма çăмăл.

Тутаркас районĕнчи, Аслă Токшикри туллимар вăтам шкулта вĕренекен 14 çулхи пионер Матвейĕв Германă тунă детектăрлă прийомник. Вăл пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен аван, телефон аппарачĕ йевĕрлĕ. Куславккари вăтам шкулта вĕренекен Желтухин тунă „O-V-I“ прийомник. Куславкка районĕнчи Бигиҙдинăри колхозник Лебедĕв Григорий тунă „O-I“ лампăлă прийомник тата радио итленĕ чухне микрофон умĕнче кам калаçнине курмали (телевизор). Лебедĕв радиопа 1929 çултанпа интересленет. Кăçал колхоз радисĕсен курсĕнчен „отличнă“ вĕренсе тухнă. Шупашкарти Кирăв йачĕпе тăракан шкулта вĕренекен 15 çулхи пионер Йурка Йакăвлĕв тунă виçĕ лампăлă вăйлă прийомник. Крупскайа йачĕпе тăракан шкулта вĕренекен 15 çулхи пионер Караçĕв тунă тĕкĕрлĕ витнă çинче микрофон умĕнче калаçакансене курмали телевизор. Ку телевизор çинче ўкерчĕк чăн-чăн телевизор çинчинчен те аван курăнать. Улатăр хулинчи радиопа интересленекен Лебедĕв тунă пĕтĕм хумлă прийомник. Ку прийомникпе пур станцисене те тытма пулать. Кунсăр пуçне ку прийомник çинче радио итлемен чухне граммофон пластинкисене те йамала.

Иртнĕ 1937 çулхи выстăвкăра уйрăм çынсем тăратнă тата пахалăх йенчен начар, радио ĕçне нимех те çĕнĕ йапаласем паман експонатсем çеç пулнă. Кăçалхи выстăвкă иртнĕ выстăвкăран пысăккăн уйрăлса тăрать. Унта кружоксем тăратнă експонатсем ытларах, радиона çĕнĕрен лайăхлатса вăйлатма май паракан аван пахалăхлă експонатсем пур.

Выстăвкă комитечĕ выстăвкăна лайăх хатĕрленсе усă. Анчах строителсен клубĕ выстăвкă валҙи сĕтелсем çителĕклĕ памасть. Выстăвкă кăнтăрла иртни 4 сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехетчен ĕçлет, анчах клуб сторăжĕсем клуба 9—10 сехетсенчех питĕрсе кайаççĕ.

Выстăвкăна уçнă кунах 30 çын ытла пырса курнă. Августăн 25-мĕшĕнче ăна 150 çын ытла курнă. Вăл çентаберĕн 10-мĕшчен кашни кунах уçă пулать.

П. Тороней.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ЧĂВАШСЕН
Государствă Педагогикă
ИНСТИТУЧĔ

отличниксене тата урăх аслă шкулсенче испытани тытнă хыççăн вырăн çук пирки вĕренме илменнисене

институтăн истори тата чĕлхепе литературă факуҙтечĕсене вĕренме илет.

Зайавлени памалли (çырса йе телеграфпа) йулашки срук çак çулăн çентаберĕн 5-мĕшĕ.

Дирекци.

3—3

Шупашкар ĕççынннисене
ПĔЛСЕ ТĂМА
ГОСБАНКĂН
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ
КАНТУРĔНЧЕ

кăçалхи августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 1-мĕш разрйадлă перекет касси уйрăмне уçнă. Вкладсем тата государствă займĕсем тăрăх операцисем пулаççĕ.

Ирхине 10 сехетрен 2 сехетчен уçă.
Тĕп Перекет касси.

3—2

Августăн 26-мĕшĕнчен пуçласа
Шупашкарти
саслă кино-театрта
саслă, илемлĕ, çĕнĕ фиҙм
„Друзья из табора“
кăтартаççĕ
СЕАНССЕМ: 6 сех. 30 мин., 8 сех. 30 м. тата 10 сех. 30 м. пуçланаççĕ.
Касса 3 сехетрен уçă.
Дирекци.

Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхозăн (Ишлей р. ЧАССР) çакнашкал номĕрлĕ лаша паспăрчĕсем çухалнă: 1656699, 1656643, 1656615, 1656629, 1656707, 235372 тата 275374. Пăрахăçа тухнă тесе шутламала.

Шупашкарти
ачасен йармăркинче
(Чапайĕв поçолки)
августăн 24-мĕшĕнчен 28-мĕшĕччен сутма КОГИЗ икĕ вырăнта ларок уçнă. Пĕрин „УЧЕБНИКИ“ Тепри „Школьно-письменные принадлежности“.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Искусствă ĕçĕсен тытăмĕн
ШУПАШКАРТИ ИЗО СТУДИЙĔ
(хаçайрхăй тăлăйн пуçласа художника вĕренекенсем)
1-мĕш тата иккĕмĕш курссене вĕренме илет
1-мĕш курса 20 çын, иккĕмĕш курса 10 çын илеççĕ.
Вĕренмелли срук виçĕ çул, производствăран уйăрăлмасăр вĕренмеле

Студира заңатисем кăçхине—куй сехетре, 7 сехетрен 10 сехетчен пулаççĕ.
кăнтăрла—канмалли кунсенче ирхине 10 сехетрен 13 сехетчен.
Вĕренме кĕрекенсем пурте рисовани тĕлĕх испытани тытаççĕ, иккĕмĕш курса кĕрекенсем тата живопис тăрăх испытани тытаççĕ. Зайавленисене августăн 28-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
Испытанисем августăн 29-мĕшĕнче.
Заңатисем çентаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.
Вĕрентнĕшĕн укçа тўлемелле мар. Студи заңатисем Театр училищин çуртĕнче пулаççĕ.
Зайавленисене çак адреспа памала: Управление по делам Искусств, тел. № 6—96 или в Дом Народного Творчества. Телефон № 5—66.

„Чăваш Коммунĕ“ сырăнса илме хакĕсем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подписка сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем те йышăнаççĕ.

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 449 Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 863.